К84.09(=Чув)
А90
Ч-39272

Светлана Асамат

# ЧӐТӐМ

Национальная библиотека ЧР
4-039272



ББК 84 Чув 7-5
А 35

*Аттепе аннене,*
*Василий Степановичпа*
*Александра Андреевна*
*Степановсене*
*çуратнăшăн, ӳстернĕшĕн,*
*çын тунăшăн*
*ĕмĕр-ĕмĕре – ТАВ.*

4-39272

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ
РЕСПУБЛИКИ

Асамат С.В.
А 35 Чăтăм. Сăвăсем, юрăсем, тĕрленчĕксем. – Шупашкар, 2003. – 192 стр.

ПРОВЕРЕНО
10 ОКТ 2017

ББК 84 Чув 7-5
© Азамат С.В., 2003

К84.09(=4чув)
А90

Светлана Асамат

# ЧӐТӐМ

2003 ҫул



«Пурнăç картлашкисем (Ступени жизни)»
С. Асамат ӳкерчĕкĕ

# ЭТЕМ ТЕНИ МĔН КАЙĂК?

*2000-2003 çç.*

## ЧА̊ТА̊М

-1-

Ăшă çил вĕретчĕ,
Сан туту чĕтретчĕ.
Сан куçу куçран пăхма,
Сан аллу алран тытма
Темшĕн именетчĕ.

Эпĕ те хĕмленнĕ,
Хĕмленсе ĕшеннĕ.
Куçăнтан куçа илни,
Аллунтан алла илни
Темĕне пĕлтернĕ.

Сывлăш пĕтрĕ мар-и,
Тăн çухалчĕ мар-и?
Куçăмран куçу – умра,
Аллăмран аллу – çумра.
Чăн-и, тĕлĕк мар–и?

-2-

Хут вăл чăтать.
Йĕркесене шăрçаласа,
Тухатмăшла тухатласа
Çыру çине çыру çырса
Çĕнтер ман чăтăмлă ăса.

Вуланине –
Ăша çăтса ярам.

Листисене –
Çура-çура тăкам ...

Вулас килни –
Хăвна курас килни.
Курас килни –
Хăвна чунтан кĕтни.

Чикĕлесе тăрать –
Юраманни.

-3-

Хĕрĕх урлă каçнă ĕнтĕ,
Çирĕмри пек курнасшăн.
Ай, шеремет хĕрарăмĕ
Ĕмĕр çамрăк пуласшăн:
Чее йĕкĕт йĕкĕлтесе
Ярпайланса пăхнипе,
Çурăмĕнчен сĕркелесе
Пилĕкĕнчен тивнипе.

-4-

Кĕмĕл çĕрĕ çĕре ӳкрĕ,
Кусса кайрĕ,
Шыва сикрĕ.
Ишме пĕлмест, путрĕ пуль,
Шыври ярса тытрĕ пуль.

Кĕмĕл çĕрĕ –
Кăмăл пулчĕ мар-и,

Сикнĕ шывĕ –
Хурлăх терчĕ мар-и?

-5-

Çатăлтатса пăс кăларса
Çанталăка ан та пăс.
Шĕвĕ сăмах – шĕвĕ ăс,
Пуш юмахна ан та тăс.

-6-

Çĕнĕ çĕр мар-ха эпĕ,
Тахçанах, çĕнĕ çĕр мар.
Сухаçă сухалать те,
Сўрелет те, –
Çĕнĕлетсех тăрать те...

-7-

Айта пĕрле
Пĕр ăрăскал тупар.
Ай, самани-и! –
Асар-писер, хаяр,
Айта пĕрле чăтар.

-8-

Ăмăртмалла – ĕçлес-тăвас
Шухăшсемпе пурăнмалла.
Ура лартса такăнтарас
Япалана пăрахмалла.

Пĕрне-пĕри ырă сунма,
Ырă тума тăрăшмалла.
Усал вăя парăнтарма
Ырă вăйсем кар! тăмалла.

Ĕмĕртенпех çак калаçу,
Авалтанпах çак тытăçу,
Этемлĕхе сăвап туса
Хăçан çăвать-ши пылпа çу?..

-9-

Куçа тусан кĕчĕ пулас,
Куççуль юхать, мĕн тăвас?
Çӳплĕ çилсем вĕрнисенчен
Ăçта тарса пытанас?

"Савнă тусăм" теес пулсан
Тен, савăнса юлăттăн,
"Чипер пурăн" теес пулсан
Тен, чиперех пурнăттăн.

Хăйăр пĕрчи мĕне пĕлсе
Куçа кĕрсе кайрĕ-ши?
Куç шывĕпе çумăр шывне
Мĕн-ма пăтраштарчĕ-ши?..

-10-

Шăкăл-шакăл, мăкăл-макăл,
Хăпăл-хапăл Пирĕшти.

Вăлтăр-валтăр, пăлтăр-палтăр
Шăлтăр-шалтăр Пирĕшти.

Чăштăк-чаштăк, мăштăк-маштăк,
Вăштăк-ваштăк Пирĕшти.

Мĕкĕл-мекĕл, çĕтĕл-çетĕл,
Йĕкĕл-йекĕл Пирĕшти.

Акăш-макăш, йăкăш-якăш,
Чăлăш-чалăш Пирĕшти.

Хайхи-майхи, айхи-тайхи,
Хуйхи-муйхи Пирĕшти.

Кăшти-кашти, вăшти-вашти,
Пăшти-пашти Пирĕшти.

Урлă-пирлĕ, арлă-ирлĕ,
Мурлă-мирлĕ Пирĕшти.

Тă-Ва-Мă-Ча Ур-Му-Хи
Йă-Та-Ка-Пи Пă-Çе-Ми!

Вăшăлтатса килтĕн-и,
Кăшăлтатса килтĕн-и,

Пăшăлтатса чĕнтĕн-и те,
Сарă сăвă сĕнтĕн-и?

*15.02.00.*

# ЕПЛЕ...

-1-

Кĕçĕр санпа тĕл пулса
Пĕр сывлăшпа сывласса
Кĕтсе илсе пулĕ-ши?

Сивĕ пăрсем çăвасса,
Сивĕ сăмах сăхасса
Епле чăтса пулĕ-ши?

-2-

Ай-хай, лаши, тур лаши,
Пĕри туйра тулашать,
Тепри уйра тăрмашать.

Хăшне йывăртарах-ши-и,
Хăшне çăмăлтарах-ши-и?..

Кӳлĕниччен – кӳлнесси,
Пĕр кӳлĕнсен – туртасси.

*23.02.00.*

# ШАЛТИ ВӐЙ

-1-

Хӑйӗнчен хӑй
Ҫӳле вӗҫме хӑтланакан,
Хӑйӗнчен хӑй
Ая шаплатнӑ тет.

Апла пулсан,
Картса пани ҫине татах та,
Карт хушас пулать,
Ҫӗклес пулать шалти вӑя –
Пурӑннӑҫемӗн.

-2-

Хӗрӳ чӗрем варринчи
Хӗрӳ кӑвайт ӑшӗнчен
Туйӑм тухать васкаса
Сан ытамна ыткӑнма,
Сан ӑшшупа ӑшӑнма...

Сансӑр сивӗ-шим ӑна?

*29.02.00.*

# ЕЙӲ

Çын куççулĕ çĕре ӳкмест.
*Ваттисен сăмахĕ.*

-1-

Чун хурланнă майĕпе –
Саппунăм та йĕп-йĕпе,
Кĕпе арким йĕп-йĕпе.

Чашкăракан çулăма,
Ма йывăççу тăкатăр?
Шывне ăçта сапатăр?

Лĕпке çунать, е тăнлав,
Тасатни-ши, е юсав? –
Çĕклемес пустуй шăв-шав.

-2-

Атте-анне ятне ятăм-ши,
Тăван халăх ятне ятăм-ши,
Çӳлти ăшă тĕпкил хӳттинчен
Çĕре – мăшкăл курма антăм-ши?

Çын куççулĕ çĕре ӳкмессе
Çын куçĕнчен пăхса пĕлме çук,
Çын куççулĕн шывне-юхăмне
Пĕвелесе чарса лартма çук.

Юхтăринех, эппин, юхтăрин,
Чунйăпатмăш-эмел пултăрин,

Курас текен курса савăнтăр,
Кулли – пăрçа пулса сапăнтăр.

Пăрçи – тымар ярса ӳстĕрин,
Хутаççисем йышлă пултăрин.
Савăнакан, татах савăнтăр,
Пăрçа пăтти çисе какăртăр.

-3-

Сада тухса йĕрес? -
Сад кӳренет.
Уя тухса йĕрес? -
Уй кӳренет...

Ейӳ пек, сарăлса кайса,
Сăн-питĕме чăрмаласа,
Янах хĕррийĕн тумласа
Чĕрçи çинех ӳкет
Вĕри куççулĕм – хам çинех,
Ытла-ытла çине-çинех...

Ытла асамлă-çке
Çын ăшĕнчи вăйсем,
Тытса тăраççĕ
Тинĕссем те, çăлкуççем...

*16.05.00.*

## ПЁРЛЁХ

Пире сăйланă çăкăр-тăвара
Турă сире туллин тавăрса патăр,
Пĕрле юрланă сăвă-юрăра
Кăмăл сĕрепĕ ăшшăн янăратăр.

Пĕрне-пĕри сумланă сăмахра
Ырă халал пуласлăхра сас патăр,
Такмакласа ташланă ташăра
Чĕрĕ хăват хавхаланса шавлатăр.

*22.02.00.*

* * *

Ыр тăвакан хур курать,
Хур тăвакан ыр курать.

Хур тăванран хăраççĕ,
Ыр тăванран кулаççĕ.

Ыр тăвиччен хур тăвакан
Айван этем сахал-им?

Усалсене хирĕç тăма
Ырă вăйсем кахал-им?

*22.05.00.*

## ЧУН

Ай, чĕрем, тапать-тапать,
Тапăлтатать, такăнать.
Чунĕ – чарăнма памасть,
Чунĕ ăшăмран тухмасть.

Чун пĕлет – пĕлмеллине,
Чун курать – курмаллине,
Пĕлнине те, курнине те –
Пурнăç кĕнеки çине.

Йывăр шухăш çăмхине
Çăмхалать, татать, сыпать,
Çунатланнă ĕмĕтне
Тӳпере ярăнтарать.

Чунпа чĕре пĕр пулса
Килĕшӳллĕн пурăнсан,
Этем телей куратех,
Пурнăç – тăнăç пулатех.

*25.05.00.*

## ПУШӐ

-1-

Ни çырас, ни вулас,
Ни утас, ни чупас,
Ни юрлас, ни ташлас,
Ни ĕçес, ни çиес,
Ни пăхас, ни курас,
Ни кулас, ни макрас,
Ни вилес, ни пурнас
Килменни килсе çитрĕ.

Пушă. Хăрушă та мар.
Ывăннă.

Чăл-пар! – пулса иртнĕ...
Çитнĕ...

-2-

Юр, çумăр – ăмăр...
Уçă-и? Тăвăр.

Мĕн кирлĕ? – Мар.
Хытнă манăн ăш-вар.

*05.06.00.*

ч-39272

Национальная библиотека
Чувашской
Республики

## КĔЛĔ

Эй,Турăçăм,Турăçăм,
Каçарсамччĕ,Турăçăм,
Сан сăмахна итлемесĕр
Усал хыççăн уттарса
Айăп-йăнăш тунăшăн,
Çылăх айне пулнăшăн
Каçарсамччĕ, Турăçăм.

Эй,Турăçăм,Турăçăм,
Йывăрланчĕ пурнăçăм,
Пулăш тухма – шурлăхран,
Пулăш тухма – чăтлăхран,
Пулăш тухма – хурлăхран,
Вăйсăрланнă ачуна,
Çын эретлĕ пурăнма
Пулăшсамччĕ, Турăçăм.

*06.06.00.*

## ЕПЛЕ-ХА?..

Эп пĕтессе кĕтсе пурăнакан,
Эс миçĕ ĕмĕр пурнасса шанатăн?
Тухатмăш тăрăх йăрккаса чупса
Кам шăпине татас шутпа хашкатăн?

Вăрă-хурахăн, вăрттăн, сĕм çĕрле,
Вилтăприсем çине вилçип çакатăн,
Епле-ха, Эсреле чунна сутса,
Ыр курасса ĕмĕтленме хăятăн?

*07.06.00.*

# КӖСКЕН

-1-

Телейлӗ чух, пурте – Хӗвел.

-2-

Нимрен нимӗр тӑвасси –
Пӗлекеншӗн ним те мар.

-3-

Пӗр ирпе, пӗр никам илтиччен
Асилтертӗм сана хам синчен –
Сапалантӑм, пушшех асаплантӑм...

-4-

Чӗртсе ятӑм сӑмавар,
Калас сӑмах шӗл-кӑвар.
Чӗлхи пуклак - ҫаврӑнмасть,
Калас сӑмах тупӑнмасть.

*21.06.00.*

## ЁÇ

-1-

Хам пурнăçа
Хам пурăнма пĕлменшĕн –
Хамсăр пуçне
Кама айăплама хăяс?

Çӳл тӳперен анни –
Çамка ватма килни.
Килмессерен – çĕнни:
Çунни, ĕнни, çиçсе илни.

-2-

Эс ĕç тăван, эс ăслă.
Эс тăрăшуллă тăрмашса
Укçа тăван, нăкă! – пурнан.
Ман пеккисем çине
Хăяккăнрах кулса пăхан.

Эпĕ ларатăп кĕнеке çырса,
Пурнатăп сăвă-юрă хайласа –
Сан шутупа
Ĕç тукалиш тукаласа.
Ман пеккисем, сан шутупа,
Ни пурăнма, ни ĕçлеме пĕлмен
Сӳсленчĕк-чухăн.

*05.05.01.*

# ЭТЕМ ТЕНИ МĔН КАЙĂК?

-1-

Тăвансемпе уярлансан
Çăвар тути пылакланать,
Çăвар тути пылаккипен
Сăмах папки çеçке çурать.

Усалсемпе урçалансан
Çăвар тути йӳçсе каять,
Çăвар тути йӳççипелен
Сăмах çеçки хăрса ларать.

-2-

Пĕр сăлтавсăр урса кайса
Арçурийĕн çухăрать,
Çавраçилĕн çавăрттарса
Тулашать те аташать.

Курса тăрса пĕрре, тепре –
Шухăш урмăшсах каять.
Çын ячĕпех çӳрет те-ха,
Эсрел сăнне кăтартать.

-3-

Пĕр йĕкĕлти хĕрача
Йăтса çӳрет пĕр арча.
Уçса хурать, кăтартать,
Куракантан сум ыйтать.

Хăть вăрлăх сап, хăть вăлча –
Шăтаймасть унта калча.

Шухăшла-ха, хĕрача,
Чирлĕ мар-и сан арча?

-4-

Кайăк-кĕшĕк, вĕçен кайăк,
Тискер кайăк, шыв кайăк,
Çĕлен кайăк, кушак кайăк...
Этем тени мĕн кайăк?

*06.02.01.*

## ИТЛЕ

Мĕскер усалланатăн эс, этем,
Тавçăрайса çитмерĕн-им ку тем?
Çынна – усал-хурах шара ярать,
Ирсĕрленсе, хăюллăн тĕп тăвать.

Усал-Хаяр хаярлансах пыни,
Усал-Ясар йăсăрлансах тăни –
Ырă-Хаяр тарса пытаннăран,
Ырă Кушар таппи таптаннăран.

Итле, Этем, тимле – Тĕнче ĕрлет,
Ийĕе чăмланă шанчăку хўхлет.
Ăшчик тулли вĕшкет сĕрепсĕр çылăх,
Хăш кĕтесре-ши, ĕнтĕркенĕ çынлăх?

*07.02.01.*

## ТАПĂНУ

Упаленсе çум çумлатăп,
Йăрансене тасататăп
Тал-пиçенрен, мăянран,
Ăптăр-каптăр курăкран.

Лартнă пахча-çимĕçе
Сырса илнĕ пур енчен
Кĕççе курăк, йыт пырши,
Мăянпа ана пыйти –
Ӳсме, пиçме памаççĕ,
Тапăннă та – асаççĕ.

Шалтăрт! – турĕ пуçăмра,
Шухăш килчĕ хăнана.
Тĕпелĕме лартнă-лартман
Татах шаккаç тăнлавран –
Тĕрлĕ вĕтĕр-шакăр шухаш
Çавра тăвать пуç тавран.

-2-

Пуçласа мĕн ахăр-авалтан,
Каялла пăхса шухăшласан,
Турăçăм, суя çине суя –
Купаланнă пулăмсем кăна.

Вăрçă хыççăн вăрçă пуçланни,
Хурлăхĕ, асапĕ тапăнни,
Ырă кун курмасăр пурăнни –
Кам вара?– кама усал туни?

“Çын – çынна!” – кĕрлет, улать тăнлав.
“Çын – çынна!” – сĕре тискер ăнлав.

*22.06.01.*

## ХĂЕХ...

-1-

Çамки ваннă, лапчăннă,
Шĕвĕр сăмси катăлнă,
Тути çурăк – хĕненĕ...
Çĕркаç ăçта çӳренĕ?

-2-

Ĕмĕрĕпех култарĕ-ши
Çынна çынран Тĕнче...
Ĕмĕрĕпех шутлаттарать,
Тĕнче – кам аллинче?

-3-

Хăех шаннă – хăех шăннă,
Хăех кӳлнĕ – хăех пӳлнĕ
Хăй çулне такам-пĕри...
Эсĕ мар-и? Эпĕ-и?

*29.09.01.*

# КАМИТ

-1-

Сăвă – сарă йĕкĕтсем,
Юрă - сарă пикесем.
Эпĕ – амăшĕ, эс – ашшĕ,
Пур асламăшпе аслашшĕ,
Пур кукамăшпе кукашшĕ.
Ăшă çумăр çулĕпен
Асамат кĕперĕпен
Евчĕ анчĕ тӳперен...

Çăм çиппин пĕтĕрĕнсе
Икĕ туйăм çупăрланчĕ,
Пĕр йĕке-шăпа тавра
Явакланчĕ, çывăхланчĕ.

Янăравлă сăвă-юрă
Амăш – эпĕ, эсĕ – ашшĕ,
Таврара çапла калаççĕ,
Тĕрĕсех пуль, ăнкараççĕ.

-2-

Чĕлхе вĕçне
Чĕпĕтекен сăмахăма
Шăлпа çыртса вакларăм,
Шеллемерĕм,
Сан хăлхуна кĕртес темерĕм.

Хамăн сăмах
Хама каçаратех тесе,
Эсĕ ăна лӳчĕркесрен хӳтĕлесе.

-3-

Суйма пĕлместĕп, ху пĕлетĕн,
Пĕлсе тăрсах, ма çĕтĕлетĕн?
Савмастăп, тек чăнах савмастăп,
Тек пĕр шите те çывхартмастăп.

Чăтма пĕлеттĕмччĕ – чăтаттăм,
Шанма пĕлеттĕмччĕ – шанаттăм,
Кĕтме пĕлеттĕмччĕ – кĕтеттĕм,
Кĕте-кĕте вăйран ӳкеттĕм.

Хутран-ситрен килсе кайса,
Эп кĕтнине шута хурса
Мана эс саппасра усрарăн,
Çухатасран та хăрамарăн.

Камит кăтартасси вĕçленчĕ,
Пӳрленнĕ туйăм çĕвĕленчĕ.

-4-

Вăл парнеленĕ
Тĕрĕллĕ алшăллине,
Вунвиçĕ çул
Куç умĕнче усранине –
Паян пуçтартăм.
Çунтармастăп,
Кăларса пеместĕп,
Тусан шăлса тĕссĕрленсен –
Урай çума каять.

Кĕтмен çĕртен
Тĕл пултăм та ăна,

Калаçнăçем –
Килĕштерме пăрахрăм.
Тинех шăпланчĕ хăлхамра:
“Эс манăн, юратап сана,
Ĕмĕрлĕхе савап сана” –
Вунвиçĕ çул янранă ахрăм.

-5-

Сана пĕрре, тепре
Пуç тӳпинчен чуптурăм:
“Тек нихăçан та.
Сывă пул ĕмĕрлĕхе.” –
Сассăр пĕлтерчĕ
Тытăннă чĕлхе.

Çӳçӳ шăртланчĕ,
Пуç тӳпи ăнланчĕ.

-6-

Кăвайт çулăмĕнче
Авкаланса-явкаланса
Хĕлхем чашлать.

Арçын ытамĕнче
Авкаланса-хуçкаланса
Пике хашкать.

*12.12.01.*

## КĂВАЙТ

Уйрăлу – уйăрсах яриччен
Пирĕнпе вăй вылярĕ:
Ăнсăртран – уявра,
Чиркӳре тĕл пултарчĕ,
Иртнине астутарчĕ.

Акă, çĕнĕ кăвайт.
Ку – юлашки, чи юлашки –
Лăпкă, пушă кăвайт.
Ку – çилпе тупăшса-ашкăнса
Вылякан çулăм мар,
Ку – хăтлă çурт пӳлĕмне
Ăшăтма шĕкĕлченĕ кăвар:
Вăйăра юрлани, чиркӳре кĕл туни –
Туйăмсен пĕрлĕхне çулăмра тĕп туни.

Тĕп тума тĕл пулни...
Ывăçпах – тĕлпулу кусĕнчен,
Ывăçпах – уйрăлу кусĕнчен
Ăшă кĕл сирпĕтетĕп.
Пире – уйăрма тĕл пултарнă
Вăйсем умĕнче нĕшĕклеччĕр,
Исленччĕр...

Хурлăх уртăннă çурăм сурать.
Хурлăхне те – кăвайт çăварне! –
Хыпса ятăр,
Веçех çунса кайтăр.
Хăть ăçта! – йăшăлти тĕтĕмне
Çӳл тӳпе хăй ăшнех вырнаçтартăр.

Уйрăмшар пурăнасчĕ ансат,
Ан хускал, ан чăрман, ан ăсат.

Куç шăрçин çутипе тĕллесе
Тивертсе ярас мар чун хĕмне.
"Ĕмĕрне те пĕлмен пĕр-пĕрне,
Пĕлĕшме тӳр килмен пуль, элле" –
Шухăшпа аманса юласси,
Шăранса шурă кĕл пуласси –
Çеç? – юлать-ши вара?..

*12.12.01- 08.01.02.*

## ÇĔНĔ ÇУЛ

Çĕнĕ çул ячĕпе саламланăн,
Мĕн сунам-ши сире, тăвансем?
Çĕнĕ çул кĕреки тулăх пултăр,
Çĕнĕ Çул кĕреки савăк пултăр,
Йăлтăртаттăр чунри çутă çăлтăр.

Çĕнĕ Çул ячĕпе çутса янă
Чăн – 12 çурта – лăпкăн çунтăр,
Çăлтăр-ĕмĕт çути шанчăк патăр,
Çăлтăр-ĕмĕт çути ан çухалтăр
Пирĕн куç умĕнчен,
Тепĕр Çĕнĕ çулччен.
Ырлăх-сывлăх, телей, юрату,
Çемьере – ăшă кăмăл, тату
Пултăринччĕ ялан, тăвансем,
Ăнăç пултăр ĕçре, тусăмсем.

*01.01.02.*

# ÇАПЛА ПУЛТĂР

-1-

Тăвансене хăна тума  
Çăкăр-тăвар, тĕпел пур.  
Тур калашле, сыпса пăхма,  
Виçĕ черкке эрех пур,  
Виçĕ алтăр сăра пур.

Чуна уçса калаçмалăх  
Хаксăр хаклă тăван пур.

-2-

Шывĕ пур, савăт пур,  
Какай пур, çăнăх пур.  
Кукăль çиме кил, тăван.

Пахча пур, хăмла пур,  
Сĕлĕ пур, урпа пур.  
Сăра ĕçме кил, тăван.

Çурчĕ пур, хапхи пур,  
Çенĕх пур, алăк пур.  
Чĕннĕ хăна пул, тăван.

Кăмăл пур, купăс пур,  
Сăвă пур, кĕвĕ пур.  
Юрласа ташлар, тăван.

-3-

Шыв тултарса хуран çакнă,
Вĕретес пулать,
Аш-пăш ярса шӳрпе яшки
Пĕçерес пулать.

Вутне чĕртме хуран айне
Вут хурас пулать,
Каснă-татнă-çурнă вута
Çунтарма юрать.

Ай, çиер-и, савăнар-и,
Тутлă-çке яшки.
Выльăх-чĕрлĕх, йывăç-курăк
Ӳсĕнет яшши.

*2001*

## ЧУХХӐМ...

Кам хушса янипе,
Кам кăтартнă çулпа
Çитсе тухрăн?
Чун ыйтни, чун туртни-и,
Е чуххăм?..

Тĕлĕкре тĕл пулни те – кĕтрет,
Кун çути, чун çути хĕпĕртет.

*08.01.02.*

## МИҪĔ?

Ыррине кĕтместĕп,
Кĕтнĕ-кĕтнĕ...
Кӳтнĕ.

Ыррине кĕтместĕп.
Кĕтнĕ-кĕтнĕ...
Хытнă.

Ыррине кĕтместĕп,
Шаннă-шаннă...
Шăннă.

Ыррине кĕтместĕп,
Ҫуннă-ҫуннă...
Сӳннĕ.

-2-

Ҫутă тĕнче –
Усал тунисемпе
Усал тăвакансен ячĕсене
Этемлĕх асĕнче усрать.
Усал туса ят хăваран
Ҫын шучĕ хутшăнсах пырать.
Мĕн ҫутатать-ши тĕнчене?

-3-

Миҫĕ ҫаран, уҫланкă таптаса,
Миҫĕ ҫырла татса ҫисе эрлентĕн,

Миçĕ шĕшкĕ тураттине авса,
Миçĕ курланкă măйрипе килентĕн?

Миçĕ çула тухса, миçĕ çĕрте,
Миçĕ кĕпер, çырма каçса çӳрерĕн,
Миçĕ саркайăк, шăпчăк юррине,
Миçĕ хутчен реххетленсе итлерĕн?

Миçĕ? – вăл, виçейми виçе.
Миçĕ – çумра та пек...
Инçе...

*2001*

## ЭТЕМЛĔХ

Арçын! Ама-этем пĕтсен
Этемлĕх ĕмĕрĕ сӳнет.

Ама-этем! Арçын пĕтсен
Этемлĕх Çĕр çинчен çĕтет.

Пĕр măшăр арçынпа хĕрарăм
Сăвап тăвасчĕ пĕр-пĕрне,
Юратура тату тупасчĕ,
Ачăрсене тĕрек парасчĕ –
Турра, ырра ĕнентерсе
Пысăк тăвасчĕ вĕсене.

*06.02.02.*

## ХАЛĂХ ПУЛТАРУЛĂХĔ

Халăх пултарулăхĕ –
Халăх чысĕ, сумлăхĕ,
Хăнана сума суса,
Тăвана хисеп туса
Пурнатпăр, тăвансем.

Халăх пултарулăхĕ –
Халăх ăсĕ, пурлăхĕ.
Ваттисен ятне тытса
Пехилне ăса хурса
Пурнатпăр, тăвансем.

Пархатарĕ пулатех,
Пархатарĕ юлатех.
Сăвăра та юрăра,
Сăмахра юлни – асра.
Çавăнпа юрлатпăр та,
Çавăнпа ташлатпăр та,
Çавăнпа тăван чĕлхĕмер
Илемне хаклатпăр та.

Малаллишĕн тапаçлан,
Вăй хурса ĕçлес, тăван.
Пулас мар юлхав, ырхан,
Ма тесен, малта – ыран.

Мăнуксем, çĕн ăрусем,
Хамăр чĕлхепех калаçчĕр,

Хамăр чĕлхепех юрлатчĕр,
Хамăр кĕвĕпех ташлатчĕр,
Хамăр чĕлхенех юратчĕр.

Тăвансем, малта – ыран,
Унăн пулмалла – пуян:
Тăван халăх чĕлхипе,
Сарă тĕрĕ тĕррипе,
Юрă-сăвă çеммипе,
Ваттисен пехилĕпе –
Ĕмĕр-ĕмĕр ĕмрипе!

Халăх пултарулăхĕ –
Халăх чысĕ, сумлăхĕ.
Халăх пултарулăхĕ –
Халăх ăсĕ, пурлăхĕ.
Халăх пултарулăхĕ –
Халăх чунĕ, çынлăхĕ.

*19.10.01.*

## ВЫЛЯВ

-1-

Аптăранă кăвакалăн
Пĕв виçетĕп Çавалта,
Эс йăмра хыçне пытаннă,
Янă çырантан вăлта.

Пул тытма килмен, сисетĕп,
Эс мана сăнан.
Хывăн-хывăн, ан пытан,
Сик, пĕрре те ан вăтан.

Иккĕн ишмелле выляр,
Чăпăл-чăпăл, чăмпăл-чăмпăл
Хум юрланине тăнлар...

-2-

Каччи – качака таки,
Хĕрĕ – сурăх путекки.
Каçăр качаки – пуçтах,
Сурăх путекки – йăмшах.

Каччă пуçĕ çӳлелле,
Хĕрĕн куçĕ çĕрелле.
Аптăриш тĕлĕнмелле,
Çуммăн тăнă, пĕрлешме.

*2001*

## КĔСКЕН

Ют çын кулли – йыт вĕрни,
Тăван  кулли – çил вĕрни.

* * *

Ăмсанура лакса ларсан –
Çав лакăмрах ларса юлан.

* * *

Тĕрте-тĕрте яратăн шырлана,
Çӳп вырăнне хуратăн-им мана?

* * *

Çулăм тӳнтерĕ – кĕл,
Çăкăр тӳнтерĕ – чĕл.

* * *

Тĕнче хĕрри яка та тикĕс –
Ултавлă курăм-ши, е никĕс?

* * *

Сан кăмăлна уçма,
Хам кăмăла уçатăп, кĕр.

* * *

Çунатлă ĕмĕт – вĕçтерет,
Шухăш – алран тытса çӳрет,
Хавхалану – ĕçлеттерет.

* * *

Вĕри сăмах – тымар ярса
Чечек шăтарнă, юлнă,
Вăл – Çеçпĕл ятлă пулнă.

* * *

Вĕшке йытăн вĕшке-вĕшке
Йĕкĕштетет еркĕшке.
Турти тĕртет, çав кĕске.

* * *

Арканнă савăт ванчăкне
Шутпах шутларăм.
Шутларăм çеç,
Пĕрле пуçтараймарăм.

* * *

Вăтанса куç хупнă майăн
Туйрăм санăн тутуна,
Кӳренсе тĕртсе ярасчĕ,
Кĕрсе ӳкрĕм ытамна.

* * *

Çанталăкĕ паян
Ытла та ăмăр.
Хаш та хаш сывлать
Йӳтенĕ çумăр.

* * *

Аçи йăмшакрах пулсан,
Ами шутсăр тăрмашать.
Тапаçлансах тăрмашăнса
Йăмшакран хавшак тăвать.

* * *

Хĕвел тытăмĕнчех
Сывлан пулсан,
Мĕн-ма чĕнмесĕр пурăнан,
Ма? – сас памастăн...

* * *

Çынна сутма пултаракан
Хăйне сутать.
Сана сутса хам лайăха юлма
Çитеймĕ намăс.

*2001*

# АЛШӐЛЛИ

Турпикине умне лартса,
Турйӗкӗтсем – юланутпа,
Ҫӗре – шыва кӗме анаҫҫӗ.
Ут тӑвараҫҫӗ те, сиксех,
Кӳлле, юханшыва чӑмаҫҫӗ,
Ӑмӑртмалла чӑмпӑлтатаҫҫӗ.

Турӑ-Ашшӗ – ачисене
Ӑшӑ пайӑркипе шӑлать,
Ӑш ҫумӑрпе ҫуса ярать.
Варкӑш – ачашлама анать,
Ҫӳҫ турама та пулӑшать.

Тур Амӑшӗ – типӗнмелли
Алшӑллине ҫакса ярать,
Пӗрер-пӗрерӗн шутласа
Ачисене ҫӳле туртать,
Кил алӑкне уҫса хурса:
“Ӗшентӗр пулӗ, кӗрӗр, канӑр,
Паппа туса илес пулать” –
Тесе лӑпкать те чуптӑвать,
Мамӑклӑ пӗлӗт хӳттине
Вырӑн сарать, витсе ярать.
Алшӑллине алла илет те
Тӗр тӗрлесе канма ларать,
Шӑппӑн, сӑпка юрри юрлать...

*17.02.02.*

## АЧАШЛĂХ

*А.Пахмутовăпа*
*Н.Добронравова*

Селĕм сăвă, селĕм кĕвĕ,
Юрату симфонийĕ: “Ачашлăх”.

Çыравçă-летчик Сент-Экзюпери:
“Пĕчĕкçĕ принц”, “Каçхи вĕçев”,
Кĕнеке-библи “Цитадель”...
Фашизм. Вилĕм.

Экзюпери-и-и! –
Тĕнче уçлăхĕнчен, упăшкине,
Тăртаннă ытамне – ачашшăн
Тăлăх Консуэлла йыхăрать.
Ачашлăх йынăшать...

*17.02.02.*

## САНĂН

Çумăнтан çумна пăчăртаса:
“Эсĕ манăн” теттĕн шантарса.
Эс пулман пулсассăн тĕнчере
Чăмласа яратчĕ чĕмере.
Пĕр самантлăх – санăн
Пулса куртăм,
Ĕмĕрлĕхе – Санăн пулса юлтăм.

*18.02.02.*

# КĔСКЕН

Нимĕн çукран ан муритле,
Ан хуçкалан-ха камитле.

* * *

Пăтранать Этемлĕх, аташать,
Шĕкĕ хуртăн, çын – çынна кăшлать.

* * *

"Чунăм, савниçĕм" тенисем асра,
Вĕсем: кайри – малта – шалта.

* * *

Ырă тумашкăн – шиклĕнрех,
Усал тăвас тесен – тӳрех.

* * *

Эп хура халăх хĕрачи –
Этем пĕрчи.

* * *

Пăрланса ларасси – виçĕ пусăм,
Хĕл ларать чунăма, суя-тусăм.

* * *

Иксĕмĕре, çу тăршшĕпех
Саркайăк юрлама вĕрентрĕ.
Сасă лармарĕ, юрласси пулмарĕ.

* * *

Сивĕ хаярлăха
Ăшă çăварлăх пар.
Параймасассăн – тар.

* * *

Ăнланса пĕтер-ха этеме:
Пĕр сăлтавсăр пуçăнать йĕме,
Çавăнтах вăл хатĕр шăл йĕрме...
Ăнланса пĕтер-ха этеме.

* * *

Эс шурлăха лакса ларни –
Тăшмансене савăнтарни.
Шырлан хĕрне тухакансем –
Эс путасса кĕтекенсем.

* * *

Кĕтнĕ ăшă анмарĕ,
Пăр çума чарăнмарĕ,
Ĕмĕр – ăмăр çанталăк,
Шăтăк-шатăк – шăналăк.

* * *

Каçпике тӳпере тем ĕçлет,
Тем сыпать те, Çĕре пĕрĕхет.
Ылтăн-кĕмĕл, ахах та мерчен
Ялтăрать юр çинче темĕнччен.

* * *

Пыл хурчĕ – шухăш,
Пуç – каска вĕлле.
Пырса сăхать те,
Шухăш – вирелле.

* * *

Ахăлтатса кулса-сурса,
Пĕрне-пĕри сăхса, пăвса,
Çыртса-татса çуракансем
Камсем?..
Чипер, хитре, япшар çынсем?..

* * *

Айванлăхна питле-питле
Чунна итле-итле, сипле.
Йывăрлăха çĕнме
Çăлăнăç пур –
Туртса кăларакан хĕрес-пакур.

* * *

Пурăннăçем
Ухмахланса пыратăп:
Çĕрĕпеле çырса ларатăп,
Кунĕпеле ĕçре чупатăп,
Ăçта ĕлкĕреймес,
Ăçта васкатăп?..

* * *

Шăпа тултарчĕ кутамкка,
Эп çаплипех-ха айванкка.
Ăçта-ши Çăлăнăç-Кĕтрет,
Ун кĕнчели мĕн пĕтĕрет?
Пĕлместĕп, те пăяв, те пушă,
Пĕлес те мар, кăштах хăрушă.

* * *

Тарăн тымарлă йăмрасем –
Çырма-çатра тĕрекĕсем,
Ватти-вĕтти тăван çĕре
Савса лартса хăварнисем –
Чăваш тĕнчи илемĕсем.
Тăван-тавраш, йăх-тĕп, ăру
Ĕçне тăсмалăх – асăну.

*18.02.02.*

* * *

Хура халăх – хăмăр-ăмăрланчĕ,
Хăй таса-кăра вăйне чакарчĕ.
Сайралса пырать, шупкаланать,
Тен пĕтет, тен салансах каять?..

*06.07.02.*

# МĔНШĔН?

Мĕншĕн сивĕнтĕн манран,
Сивĕ куçпа пăхрăм-и,
Сивĕ шывпа сапрăм-и,
Сив сăмах каларăм-и?

Хумлă шывăн кĕввипе
Хурлă чуна йăпатма
Чупса антăм кӳль хĕрне,
Лартăм йăмра хӳттине.

Тăрă шывпа çăвăнтăм,
Ишрĕм-ишрĕм, ывăнтăм.
Ватă йăмра тымарĕ
Вăрттăн çапла каларĕ:

"Ăшă шыв та сивĕнет,
Сивĕтмесĕр – сивĕнместь,
Сивĕ шыв та ăшăнать,
Ăшăтмасăр – ăшăнмасть.
Пуç тавралла пĕр Тĕнче –
Çутçанталăк аллинче,
Тĕлме тĕл – пĕрлешесси,
Тĕл мар пулсан, пĕрлешнинчен
Сайра пулать, савнасси".

*22.02.02.*

# АМӐШĔ

Сӑвӑ-кӗвӗ ҫӗкленӳллӗн, хӗмлӗн,
Чунӑмран тухать хашка-хашка,
Ҫичӗ ту тӑрри кисренчӗ мар-и,
Ӑшӑ сывлӑш хумӗ – кӑтрашка.

Сӑввӑмсен пуласлӑхӗ епле-ши,
Мӗн-ши вӗсене малта кӗтет?
Йыхӑрать-и сӑввӑм, ӗсӗклет-и,
Е йӑвашшӑн илӗртсе пуплет?

Миҫе ҫӗр ача-пӑча ҫуратрӑм,
Пӗлӗҫ-ши татуллӑн пурӑнма?
Шара ярӗҫ, е телей кӑтартӗҫ,
Кирлӗехчӗ-ши асапланма?

Хам асапланни вӑл темӗн мар-ха,
Ачамсен шӑпи шутлаттарать.
Эпӗ вӗсен амӑшӗ, тӗрекӗ,
Манӑн – тӗп евит тытас пулать.

*24.02.02.*

## ĂÇТА КАЯН?

– Ăçта каян?
– Хам пĕлеп.
– Ăçта каян?
– Сана мĕн?
– Ма вăрçатăн?
– Кай-ха, кай.
– Ма вăрçатăн эс, тăмсай.
– Ăçта каян?
– Каламас.
– Иртсе кай, чăрмантармас.
– Вăт пулать, чăкраш этем:
Вĕçкĕн, сурăх, кутамас,
Ланккаса çӳрен пулмас.
Путлĕ калаçма пĕлмеç! –
Хам пĕле-еп, сана мĕн ĕ-ĕç...
Мухмăр аптратман пулсан
Янрататтăм-ха шăн-шан.
Те Мирун патне кĕрес,
Те Çеруш патне кĕрес,
Э-эх, пĕрле пырсанччĕ, леш:
"Хам пĕле-еп, сана мĕн ĕ-ĕç" –
Тулккăн калаçма пĕлмеç,
Ĕçсĕр сулланса çӳреç...

*24.02.02.*

## СУЛХӐН

Сулхӑн.
Куштан та вичкӗн ҫил ачи
Ши-и! шӑхӑрса, пуҫтахланса,
Пӗр мӑнтӑр ҫумӑр пӗлӗтне
Хӑваласа ҫӳрерӗ те
Тӳпе уй-хирӗпе...
Канса илме чарӑнса тӑчӗ
Шӑп! пирӗн ял ҫывӑхӗнче,
Хӗвел ҫав пӗлӗт хыҫӗнче.

Кӗтӳ ачи кӗтӳ кӗтет,
Тӳпенелле пӑхса пуплет:
“Хӗвелӗ тухтӑрччӗ тесе
Пӗлӗтне темпе тӗртмелле,
Хӗвелӗ тухтӑрччӗ тесе
Мӗскер туса илӗртмелле?..

Ши-и! шӑхӑрать, ши-и! шӑхӑрать,
Хӗвел илтет те, йӑ-ӑл-л! кулать.

*25.02.02.*

## ЮМАХ

Качча илес ёмётпеле
Инкек куç хывнă Телее,
Хёве хупма хатёрленсе
Вăрланă-тарнă сар хёре.

Инкек-Синкек мăшкăлёнчен
Хёр-Телее Йёкёт-Тёрек
Çăлать, хăй мăшăрё тăвать.
Телей – тёреклё: Ăнăçу,
Чăтăм, Илем, Сăпай, Тату,
Шеп, Савăшу, Ясар, Тирпей,
Лайăх, Хăват, Кил – ятсемпе
Ача-пăча çуратнă тет.
Тёрекё çирёп пулнă тет,
Ачисене те, арăмне те
Юратнă тет, упранă тет.

Инкек, вёчёрхенсе кайса
Качча илет тет Хурлăха,
Çураттарать тет: Ырату,
Тискер, Амак, Аскăн, Усал,
Начар, Асап, Хăруш, Типшар,
Кай, Сӳтёк, Тавлашу – ача.
Çухăрттарать тет арăмне те,
Нăйкăшакан ачисене те...

Çывăхланасшăн – Тёрекпе,
Хурлăх – хурланă Телее,
Телейё Хурлăха шелленё,
Инкекё Тёреке çилленнё.

Тен, çавăнпах, Пурăнăçра –
Хурлăх-Тĕрек, Телей-Инкек,
Шурă-Хура, Йӳçĕ-Пылак,
Сахăр-Тăвар, Шĕвĕр-Пуклак
Япаласем пулса иртеççĕ,
Этемлĕх шăпине тĕвеççĕ,
Этемлĕх шăпине тĕвлеççĕ.

*28.02.02.*

## ТУР ПАЛЛИ

Кăкăртан аярах – тур палли,
Сĕртĕнмен-и ăна ют алли,
Ют хĕрарăм савса куç хывман-и,
Ăрша-сывлăш вĕрсе чуптуман-и?

Ăрăсна ăсămпа чӳхетме,
Тур палли вырăнне чӳклеме,
Чăн шалти – ăшунти тĕнчӳне
Ирĕк патăн ун витĕр кĕме...

Эсĕ ман – Турă пӳрнĕ Асам,
Салтăнам, ытамна сапăнам.

*18.02.02.*

# КĔСКЕН

Туйăмĕ – утăн тулхăрать,
Ăс-тăн – тилхепинчен туртать.

* * *

Кăвайтне сӳнтертĕм-ха,
Çуннă вырăнĕ çунать,
Ĕнĕк вырăн ыратать.

* * *

Чунри саркайăка итлетĕп,
Çăхансене хăваласа
Вăя пĕтерес марччĕ тетĕп.

* * *

– Кайри – мала-а,
Кайри – мала-а, хуркайăк!..
Э-э-эй!..
– Ки-как, ки-как, ки-как, ки-как...
– Пирĕн уя анса ларса
Канса илсемĕрччĕ пĕртак...
– Ки-как, ки-как, ки-как, ки-как...

Ки-как, ки-как – хурав, е йыхăрав?..

*02.02.02.*

## ÇЫН ПУЛМА

“Çак хĕл иртет те, çуркунне çитсен,
Çыран хĕрне ларса йĕретĕп те,
Пите çуса, куççулĕмпе пĕрле
Хурлăхăма шывпа
Юхтарса ярăп” – теттĕм.

Çыран хĕрне çитсе тăрсан
Куççуль юхтарасси пулмарĕ,
Шыв юхăмне пăхса тăрса
Ăшчикĕм вăркама пуçларĕ:
“Чикеленсе кайса чупать,
Шарла-шарла мĕскер калать,
Такăнтаран чула вăрçать-и,
Çаптаракан çиле ятлать-и?
Çыран тăпри шыва шăвать,
Çырма мĕне пĕлсе шавлать,
Юрлать, кулать е макăрать?”

Çынна та çăмăл мар пуль
Çын пулма,
Шыва та çăмăл мар пуль
Шыв пулма.

*27.04.02.*

## ЭС ИРТСЕ КАЙ...

Ют пек, пĕрне пĕри
Сăмах хушмасăр,
Куç айăккин
Пăхса илнипелех,
Çырлахрăмăр пулать...

Эс иртсе кай, эп пуçăма пĕкем,
Курмарăн-им?
Куççулĕм – пĕр çĕклем.
Эс куриччен, çын куриччен
Ăçта тăкас?
Тăкмастăп, шел тăкма,
Кашни тумламĕ хаклă.
Çăтатăп, пуçăм çаврăнать.
Çăтатăп, асăм асăхать...

Кашни тумламĕ –
Ман куç шăрçи тĕпелĕнчи
Сан куç шăрçи хĕлхемĕ пуль...
Тăксан – типет, ман сансăр та,
Санпах пулас килет...
Эс итрсе кай, эс ман умран
Илемлĕ кунăн, тĕттĕм каçăн
Иртсе кай...

Эп шуçăм мар-ши? –
Ăшă Хĕвеле – сана, чĕнетĕп.
Эп ĕнтрĕк мар-ши? –
Сивĕ Уйăха – сана, кĕтĕтĕп.
Мĕн чухлĕ сывлăм кирлĕ

Шуçăма е ĕнтрĕке –
Тĕлпулăва кĕтсе илме,
Тепре килсе кайма –
Ӳкĕтлеме...

Ӳкетлеме?.. Ан аппалан,
Мĕн те пулин килни-кайни
Мĕн ĕмĕртен, хăйне хăех
Черетленет, айван.

*25.04.02.*

## СИВĔ

Ан шиклен, ал тытса
"Ыр сунатăп" çумне
Пĕр сăмах та хушмастăп,
Тек, санпа ним çинчен те
Пуплев пуçармастăп.

Çук, ют марччĕ эпир,
Ютшăннишĕн текех кулянмастăп,
Саншăн хупăннă чун алăкне
Тăрпалтайăн хирсе уçаймастăп.

Ан шиклен, сан аллу пек –
Ман алă тупанĕ те сивĕ.
Санпа ман хушăри пулăмсем –
Ишĕк, кивĕ.

*26.09.02.*

# ЙӐНӐШ

Чунӑмри ҫӑтмаха
Ҫутатса пурӑнма
Килтӗн тенӗччӗ, ҫук.
Чунӑмри тамӑк алӑкӗ
Уҫӑлчӗ кайрӗ...

Ан та турт аллӑмран,
Ан шӑтар куҫӑмран,
Ҫук, анмастӑп унта,
Сик пӗччен.
Манӑн, хамӑн ҫӑтмах тӗнчине
Сӳнтерме ирӗк ҫук.
Тамӑка чӗртнисен умӗнче те,
Эп – явап тытас ҫук.

Сик пӗччен,
Ӑшӑма ҫунтарма килнисем –
Сан пекрех куштансем.

Малтанхи –
Сар хӗвел пайӑрки-сӑмахсем
Ҫӑтмаха ерешлеҫҫӗ.
Кайранхи –
Вутпуҫҫи-пуленке сӑмахсем
Тамӑка тӗтӗмлеҫҫӗ.

*29.05.02.*

## ПУРӐНАСЧӖ

Асаннем: “Йӗркеллӗ пул,
Сӑмахпа, та ӗҫӳпе те
Татӑклӑ, явапллӑ пул.
Аҫупа аннӳ ятне
Ан ӳкер уру айне,
Таптакан – кӗтсех тӑрать,
Таптанишӗн мухтанса
Мӑшкӑл тума пултарать.
Чи хакли ҫак пурнӑҫра –
Сывлӑх, куҫлӑ-пуҫлӑ пул,
Тимлӗ, ҫыпӑҫуллӑ пул” –
Тетчӗ, куҫӑмран ӑшпиллӗ
Вичкӗн куҫӗпе пӑхса,
Иккӗн ҫуммӑн алӗҫ тунӑ,
Ҫум ҫумланӑ, кӗпе ҫунӑ,
Ҫыврас умӗн ӑшшӑн-лӑпкӑн
Халалланӑ сӑмахра.

Мӑнука, хӗрӗмсене –
Халӗ ҫакӑ сӑмаха
Лӑпкӑн хистесе калатӑп,
Асанне ӗҫне тӑватӑп.

Пурӑнасчӗ-ха йӗркеллӗ,
Пурӑнасчӗ-ха чипер,
Ан кӳренччӗр: тӑван ҫӗрӗм,
Аслисем, атте-аннем.

Ятӑм, чысӑм, ӑрӑскалӑм –
Халӑх куҫӗн шӑрҫинче,
Халӑх чӗлхи вӗҫӗнче.

Аслă, вăйлă, пултаруллă,
Ĕçчен чăваш халăхне
Тăнăç пурнăç пар, Тĕнче.

*01.07.02.*

## ТЕЛЕЙЛĔ ПУЛĔ ЭСĔ

Сана курса
"Салам" тесе каласчĕ,
Санпа курса калаçманни
Пин çул та иртрĕ пуль.

Сана курса
"Савни" тесе каласчĕ,
Сана "савниçĕм" теменни
Пин çул та иртрĕ пуль.

Сана курса
"Телей" тесе каласчĕ,
Сана "телейĕм" теменни
Пин çул та иртрĕ пуль.

Мана аса илместĕнех пулсан,
Чăнах, телейлĕ пулĕ эсĕ?

*03.07.02.*

# ÇИМĔК ÇИТРĔ ПУЛМАЛЛА

Лантăш хыççăн вăрманта
Çимĕк чечек ешерет,
Кĕрен-кăвак шерепи
Татса илме илĕртет.
Çимĕк çитрĕ пулмалла,
Çимĕк мунчи хутмалла,
Çичĕ курăк милĕкĕпе
Çапăнса çăвăнмалла.

Вăрманти уçланкăра
Кăвайт чĕртсе ямалла,
Йĕкĕтсемпе пикесен
Выляма пуçăнмалла.
Çимĕк çитрĕ пулмалла,
Çимĕк вăййи тумалла,
Кăвайт урлă сике-сике
Юрласа ташламалла.

Çурçĕр хыççăн, шуçăмпа
Вăрман тăрăх утмалла,
Хурăн, пилеш йывăççин
Тураттине хуçмалла.
Çимĕк çитрĕ пулмалла,
Çимĕк йăли тумалла,
Кил хапхине, алăкне
Симĕс парне çакмалла.
Кил-çурта тасатмалла,
Кăмакине хутмалла,
Кукăль-макăль пĕçерсе
Çăва çине каймалла,
Тăвансемпе пухăнса
Çыпăçуллă кăмăлпа
Ваттисене памалла.

*14.06.02.*

# ЁМĔТ

Салтак тӳмми чечеккин
Йăлттам шурă çеçкине
Татаççĕ те татаççĕ,
Хĕрсем юмăç яраççĕ,
Куç хывнине юратнипен
Çĕтересрен хăраççĕ:
Качча каяс килнипе,
Ача тăвас килнипе,
Упăшкипе мĕн виличчен
Килĕштерес килнипе.

Салтак тӳмми чечекки,
Урăх çуккă сан пекки
Хăйне татма сĕнекен,
Юмăç яма пĕлекен.
Шур пĕркенчĕк – шурă тум
Тăхăнасшăн сар хĕрсем –
Мĕн тери пăшăрхануллă,
Йăпануллă ёмĕтсем.

Ырă çын тĕлне пуласшăн,
Туй туса мăшăрланасшăн,
Чăн телей курса пурнасшăн
Чăмăрланнă пикесем,
Шăнăрланнă йĕкĕтсем.

*03.06.02.*

## ТАВ

-1-

Турăçăм, епле сăваплă Эсĕ,
Чунăма хăват паратăн – Эсĕ.

Ытларах калаçнăшăн каçар,
Ытларах аташнăшăн каçар.

Иксĕлми илемлĕ Тĕнчере,
Çĕр çинче те çӳллĕ тӳпере
Пултăрччĕ Хăвна та пархатар,
Евăпа Адам патвар, хастар.

Пурнăç тыткăчи, чĕре Хĕресĕ –
Турăçăм, епле хăватлă Эсĕ.

-2-

Ăсталăх тĕшши – шырав,
Ăсталăх тĕшши – курав:
Чунпа, шалти куçпа.

Турăран, юнран – ĕçченлĕх.

*23.07.02.*

# ВӐЙӐМА ПУХМА

-1-

Ӑҫта ҫӳрет-ши манӑн ыйӑх,
Килне ӑсанчӗ сивӗ Уйӑх,
Хӗвел тухать, тӑри юрлать,
Ёшентӗм пуль, канас пулать.

Ҫӳретӗрех-и пӗр кана
Хӑй ҫулӗпе унта-кунта.
Кичем пульнех пӗр вырӑнта
Эп выртасса кӗтсе ларма.

Таврӑннине сиснӗ-сисмен
Туям та, тӗлӗрсе каям.
Ак, анасларӑм, ак – тепре,
Карса илет ачаш тӗтре.

-2-

Уттарам-ха,
Тумалли ӗҫе тӑвас.
Чуптарам-ха,
Ҫитмелли ҫӗре васкас.
Ҫырткалам-ха,
Вӑйӑма пухма апатланас,
Салтӑнам-ха,
Вӑйӑма пухма паппа тӑвас.

*22.07.02.*

# АЙ, МЁН-МА-ШИ?

Çурхи шывăн шавласа
Сырса илчĕç шухăшсем,
Кĕрхи кунăн шăпланса
Шăнса ларчĕç ĕмĕтсем.

Çурхи çилĕн выляса
Чупкаларĕç шухăшсем,
Кĕрхи çилĕн уласа
Тарса пĕтрĕç ĕмĕтсем.

Çурхи кунăн çуталса
Çунчĕç чĕрĕ шухăшсем,
Кĕрхи кунăн хуралса
Сӳнчĕç çунăк ĕмĕтсем.

Ай, мĕн-ма-ши, мĕн-ма-ши,
Мĕн-ма ялан çапла-ши,
Ай, шухăшсем – тăвансем,
Ай, ĕмĕтсем – пĕлĕшсем.

Ăçта кăна çитместĕр,
Ăçта кăна кĕместĕр,
Канăç тупма пĕлместĕр,
Канăç мĕнне пĕлместĕр.

*17.08.02.*

## ПИКЕ-ТĔТРЕ

Çара уран Пике-тĕтре
Вĕлтĕртетсе вĕçсе чупать,
Курăк, чечек çеçкийĕсен,
Шултра, вĕтенкĕ çулçăсен
Питне-куçне çуса ярать.
Улăх-çаран, ката-вăрман
Савăннипе çиççе ларать,
Юмах тĕнчийĕн курăнать.

*13.07.02.*

## ШЫРАВ

– Çынна мĕскер çитменнине
Камран ыйтса пĕлес?
– Сана мĕн ĕç?
– Ман ĕçĕм çук-ха та...
– Мĕскер тата?
– Ну, мĕн усси,
Мĕн пархатарĕ? – пурăннин,
Ытла кичем.
– Таçта –
Пĕр тонна хурлăх айĕнче
Пĕр чĕптĕм савăнăç
Выртать тет, çуталса,
Кайса шыра...

*31.11.02.*

# КĂМРĂК

-1-

Эсĕ, пурнăçăмри чи пирвайхи –
Чĕрем пушарĕн кăмрăкĕ.

Пыр йӳçехсе килсен
Çав кăмрăка
Куççулĕм кӳллине яратăп.

Санпа тĕл пуличчен
Куççулĕм тутине пĕлменччĕ,
Эс пылаклатрăн та,
Эсех – йӳçĕтрĕн-ши ăна?..

-2-

Хĕрлĕ пите, хĕрлĕ пите
Хура хурлăх хуратрĕ,
Сарă сăна, сарă сăна
Саркам шухăш шуратрĕ.

*12.09.02.*

# ЭТЕМСЕМ

Эй, ёçлеççĕ, вĕренеççĕ,
Тишкĕреççĕ, çĕкленеççĕ,
Кирлине ăса илеççĕ,
Çынран çын тăвас тееççĕ, этемсем.

Вăй виçеççĕ, кĕрешеççĕ,
Хиркешеççĕ, мирлешеççĕ,
Çынна çын пулма хистеççĕ,
Çынран çын тăвас тееççĕ, этемсем.

Талпăнаççĕ, такăнаççĕ,
Каллĕ-маллĕ пăхкалаççĕ,
Ĕмĕре сая ямаççĕ,
Ваттисен ятне тытаççĕ, этемсем.

Çынран çын çуралать,
Кашкăр – кашкăртан.
Çынран çын çуралать,
Кайăк – кайăкран.
Тем те чăтнă, тем те тӳснĕ
Çын ăшĕнчи чунпа юн,
Ун тавра явакланаççĕ
Сарă кунпа хура кун.

Ĕçлĕ çын вăл, çын-тăк çын,
Ăслă çын вăл, çын-тăк çын,
Ырă çын вăл, çын-тăк çын,
Хăть хĕрарăм, хăть арçын.

*25.11.02.*

## ХЁВЕЛ ШЕВЛИ

Чунăм тулли – хĕвел шевли,
Куçăм тулли – хĕвел шевли,
Тĕпел тулли – хĕвел шевли,
Тĕнче тулли – хĕвел шевли.

Чунĕ вылять ачапчалла,
Вăхăт туртать ватлăхалла.

Ай, анваскат-ха, ан васка,
Пурнăç тутийĕ – тăкăска
Пулсан та, Вăхăт, ан хашка.
Хĕрсе ĕçлен шăм-шакăма
Ан таянтар туя çине,
Ан усăнтарччĕ пуçăма
Ĕрхеннĕ хулпуççи çине.

Çут тĕнчерен уйрăласси,
Хурлăхлă чан янăрасси
Те аякра, те çывăхра,
Утасчĕ-ха таплаттарса,
Ĕçлесчĕ-ха шартлаттарса...

Вăхăтăм-Тусăм, ан ятла,
Тур лашуна ан хăвала.

*24.11.02.*

# СӐВӐ-ЮРӐ – ЧУН ӐШШИ

Ҫавра уйӑх ватӑлчӗ,
Ватӑлчӗ те, катӑлчӗ.
Ҫӳл тӳпене, ҫамрӑкланнӑ
Ҫурла уйӑх таврӑнчӗ.

Кун – Хӗвеле юратать,
Каҫ – Уйӑха кӑмӑллать,
Кунне-ҫӗрне уямасӑр
Ӗмӗр катӑлсах пырать.

Уйӑх – кӗмӗл саптӑрччӗ,
Хӗвел – ылтӑн саптӑрччӗ,
Ылтӑн-кӗмӗлӗн, хевтеллӗн,
Кӑмӑл йӑлтӑртаттӑрччӗ.

Ай, Хӗвелӗм, Уйӑхӑм,
Катӑлинччӗ хуйӑхӑм.
Ҫут тӗнчене тав туса
Пурнайрасчӗ савӑнса.

Савӑнсан та – юрласси,
Хурлансан та – юрласси.
Сӑвӑ-юрӑ – ҫӑкӑр-тӑвар,
Чӗре ӑшши, чун ӑшши.

*08.04.03.*

## ТАРАСА

Хĕлле, çулла-и,
Кĕркунне, е çуркунне-и –
Мĕн тĕрлĕ çавраçил çатăлтатать,
Мĕн тĕрлĕ алхасать.
Пĕр çăвартан тухса
Çĕр тĕрлĕ çăвара кĕрсе тухать,
Çĕр хăлхара
Çĕр тĕрлĕ янăрать...

Эп çăвара та,
Хăлхана та хупнă,
Ват супнă шухăшăм хăшкăлтарать,
Çын чунĕ, мĕскерпе? –
Пуян, пухутлă.
Мĕн-ма манатпăр-ши?
Кашни сăмах та, ĕç те – шутлă,
Кайран – тарасана хурса виçме,
Кам чунĕ,
Мĕскерпе пухутлине пĕлме.

Кама пĕлме?
Асли, Пĕлсе Тăраканни
Валли-им? – тараси,
Этем ачи-пăчи валли.

Тур умĕнче явап тытма,
Çылăхсене каçарттарма
Тивессине пĕлтерекен
Асамлă-сисĕмлĕ,
Сăваплă савăт вăл,
Виçевĕш-тараса...

*25.01.03.*

# ПАРНЕ

-1-

Итлĕр мана, эпĕ – Кĕвĕ,
Итлĕр мана, эпĕ – Сăвă,
Итлĕр мана, эпĕ – Юрă.

Кĕввĕме, Сăввăма, Юррăма –
Асăнса вулама, юрлама
Парнелетĕп сана, тăванăм.

-2-

Тавах, атте-аннем,
Тавах, тăван тавралăхăм,
Тавах, чипер ачалăхăм,
Тавах, хаваслă яшлăхăм,
Тавах, вĕри ăсталăхăм.

-3-

Тăван килĕм
"Кил" – тесе чĕнет,
Чĕннипе, кайсах
Тăрас килет.

Тăван килĕм панă
Пил-парне
Ӳсĕмлет, çĕклет
Тиеннĕ ĕçĕме.

*18.11.02.*

## ÇАВРĂМ

Çĕре çемĕçтерме
Тӳпе йĕпхӳ сапать,
Тӳпе йĕпхӳ сапни
Çĕре савăнтарать.

Сухаçă акнă вăрлăх
Пуласшăн тулăх пурлăх.
Чĕр тымартан çĕкленнĕ
Хунав та хĕпĕртенĕ.

Серте, вĕлтрен яшки
Çиетпĕр, вăйланатпăр,
Çутă тĕнче çине
Çутă куçпа пăхатпăр.

Улăх-çаран ешерчĕ,
Вăрман та симĕсленчĕ,
Çанталăкĕ – тӳлек,
Куçне уçать чечек.

Çуркуннене савса
Сар кун сапăрланать,
Çĕрпе Тӳпе тĕнчи
Çĕн çаврăм çавăрать.

*30.04.03.*



*Юратнӑ йӑмӑкӑм –*
*Чӑваш патшалӑх*
*оперӑпа балет театрӗн артистки*
*Прокопьева Альбина Васильевна*

# САРКАЙӐКӐМ-ЙӐМӐКӐМ

*Ытарайми ырӑ йӑмӑкӑм Альбина*
*ҫӗре кӗнӗ хыҫҫӑн хӗрӗх кунне*
*каланӑ хӳхлевӗм*

-1-

Шыв тӗкӗрӗ ҫинчен –
Юратнӑ йӑмӑкӑм сӑнарӗ
Чӗрем хӳхленине тӑнлать.
Ҫил вӗрнипе
Шыв хумханса каять те,
Ӑшӑ ӳкерчӗк саланать.
Те ҫил, те хум ӑна таҫта
Хӑйпе пӗрле сирсе каять.

Ӗмӗрлӗхе кайнӑскере эп:
"Ан кай, ан кай, юлсам" тееймӗп,
Ӗмӗрлӗхе уйрӑлнине
Епле, епле чӑтса ирттерӗп?

Ай, йӑмӑкӑм-саркайӑкӑм,
Ӑш кӑмӑлу – ӑшӑ кӑварччӗ,
Сӑн-сӑпату – сарӑ чечек,
Епле хитре, епле тасаччӗ.

Сӑпайлӑн, лӑпкӑн калаҫса
Чуна лӑплантарма пӗлеттӗн,
Ырӑ сӗнӳ параттӑн та
Именчӗклӗн кулса илеттӗн.

Ача чухне, ӳссе ҫитсен те –
Ах, кӳрентернӗ пуль, каҫар.
Эсӗ ҫукки – синкерлӗ чӑнлӑх,
Ӑшра – ҫӗр пӑт куҫҫуль-тӑвар.

Васкавлăн вĕлкĕшсе çӳреттĕн,
Ĕçченлĕхпе тĕлĕнтереттĕн,
Пурнас килен вăй-халупа
Хавшанă сывлăхна сиплеттĕн.

Ай, шăнкăр шывăн юхса кайрĕ
Чипер, илемлĕ пурнăçу,
Юлчĕ, сăваплăн асăнмалăх
Сăпай кӳрен черчен сассу.

Пĕртен-пĕрех хĕрӳшĕн пултăн
Чăн-чăн тĕрек паран анне,
Самантлăха та ӳкермерĕн
Мăшăр, аçу-аннӳ ятне.

Тăванăм-йăмăкăм, эс пултăн,
Пуриншĕн те илем, кĕтрет.
Турă-Атте килне кĕрессĕн –
Шанас та ĕненес килет.

-2-

Ах, ăшăмри кăвайтăн
Пĕр хĕлхемĕ сӳнчĕ.
Вăл – савнă йăмăкăм
Ăшшийĕ пулчĕ.

Сӳннĕ пулсан та – çутă асăм
Ăшра – саркайăкăн вĕçет,
Ытарайми ăшпиллĕ чунĕ
Çĕтмен, пĕтмен, Çӳлте – ĕçлет.

*08.05.03.*

# ТЕÇÇĔ ПУЛЬ...

Çумăрĕ те çиçсе илет,
Хĕвелĕ те çиçсе илет,
Кăмăл çиçтĕр теççĕ пуль.

Аякран та салам килет,
Çывăхран та салам килет,
Хисеп куртăр теççĕ пуль.

Тăварне те çирĕм ĕнтĕ,
Сахăрне те çирĕм ĕнтĕ,
Тутлăх куртăр теççĕ пуль.

Ешĕл ĕмĕр иртрĕ ĕнтĕ,
Писнĕ вăхăт çитрĕ ĕнтĕ,
Савăк куртăр теççĕ пуль.

*03.06.03.*

## ТИХА

Ирпе вăраннă карчăкпа старик,
Пуçланă тет, хĕрне наккас пама:

– Эпир апла пулман, капла пулман,
Эсир вара пурнасшăн урăхла.
– Ваттисене итлеменни, ачам,
Илемсĕр, путсĕр япала.
– Кай, вĕрекен хуран пекех
Лăкăртататăн эс, анне.
Эсĕ те, ватă мăкăр пек
Мăкăртататăн-вĕт, атте.
Текех шкул ачи мар пуль эп,
Эп хам та хĕрпе ывăл ӳстереп,
Çитет пуль кунĕн-çĕрĕн вĕрентме...

– Нимле машин та кирлĕ мар,
Илес пулать тиха,
Ӳсет, хăмлать, пухут пулать,
Кайран чухлатăр, куç курать.
– Шутла, упăшкуна кала,
Машин илессипе çӳрет
Таçта çапкаланса,
Пуяс тесен, килте ĕç тумалла.
– Мĕн ĕçлесе илен ялта?
Çапкаланса та çӳремест, ĕçмест,
Мĕн ĕçлесе илни килех килет.
Выçă лармастпăр пуль, ара,
Тăраниччен çиетпĕр мар-им-ха?
Калана-тунă, "Жигули" илетпĕр.
– Кĕрӳ валли пулать вăл "Жигули",
Асту, пулатăн ак такам кулли...

– Атте, тиха илес пирки
Эс мана мар̌, ăна кала.
– Килсен – калап, эс тулькkăш
Ăна майлă пире хирĕç ан шарла.
– Машин та кирлĕ-ха,
Ав, Кĕркури Иванч, кĕрӳшĕпе наччас
Тăхлачисем патне вашлаттарса
Кайса килеççĕ хăнана.
Машук, кĕтӳ хăвалама тухсан
Ай, мухтанать, ай, мухтанать вара-а!
– Эс, карчăк ăсĕпе ялан,
Ту – унталла, ту – кунталла.
Калаçнă-талнă, машин мар,
Кăçал тиха туянмалла.
Эп сăмах татнă Тукасри Çтаппанпала,
Вĕсен лаши кĕçех хумламалла.
– Юрать ара, пĕртен пĕрех хĕре
Йĕркеллĕ пурăнма пулăшмалла.
– Арча тĕпне хурса пуçтарнине –
Хушатпăр хамăр пенси укçине.

Хĕрĕ чĕнмерĕ, тухрĕ шыв ăсма,
Пӳрт умĕнчи колонкăна.

– Ярас-ха телевизор, мĕн калаççĕ,
Пĕрмай пустуй арман çавăрттараççĕ.
Кукамăшĕ, Егорка вăрансан,
Кала-ха, пусă шывĕ кайса ăстăр,
Малтан, питне çусан,
Тем мур пылакĕ мар,
Яшка, шаркку антарса çитĕр.
Кайран унпа уя тухса кĕресчĕ,

Сĕлĕ акма çĕр лаптăкĕ илесчĕ.
Ашшĕ килсен, тухас та сухалас,
Тиха валли апат акса юлас.

Егорка выртнă вărттăн итлесе,
Çтаппан Алĕшĕ пек,
Юланутпа ярăнасса ĕмĕтленсе.

*25.05.03.*

* * *

Вăйлă пулма мĕн çитмест?
Вăйлă пулма хал çитмест.
Халне камран ыйтмалла,
Халне ăçта тупмалла?

Канлĕ пулма мĕн çитмест?
Ытлăх-çитлĕх çитеймест,
Ытлă-çитлĕ пурăнмалăх
Укçи-тенки çитеймест.

Ĕçлемесĕр пурăнман,
Ĕçлемесĕр пурăнмас,
Те, ĕçлеме пĕлместĕп,
Тен, пурăнма пĕлместĕп.

*09.04.03.*

## ТЕТТЕ

-1-

Вилĕмсĕр Пурăнăç – Этемлĕхе
Татса сыпнипеле сывлать.
Ун ĕçĕ – çав.

Тăват кĕтеслĕх ăшĕнче
Вырнаçнă виçкĕтеслĕх никĕсĕ –
Аслаттесем,
Икĕ кĕтесĕ – аттепе анне,
Ывăлĕ, хĕрĕ те –
Тăват кĕтеслĕхе кĕрсе тухса
Тĕреклĕ никĕсе ӳкессисем.

-2-

Мĕн-ха вăл пурăнăç? –
Урай, мачча, тăват стена,
Тĕнче – тупăк-сăпка...
Кунта килни, лере кайни –
Сиссе ĕлкĕреймен самант кăна.

-3-

Пур! – ăнăç, пурнăç –
Пур пек туйăнать,
Ăнăçĕ çук пулсан та,
Кайиччен – мĕн тивнине:
Пылак е кăвасак? –
Чăмлак туса
Çăтса ярас пулать.

-4-

“Тет” сăмаха
Шута илсен – тĕпе,
Çĕр те, Этемлĕх те –
“Хуркайăк çулĕ” те, Хĕвел те –
Космос тытăмĕнчи
Сĕре пĕчик тетте.

*25.05.03.*

## КУÇÇУЛЬ

“Сивĕ пĕлĕт, хура пĕлĕт,
Çумăр тăкма чарăн-ха” –
Тенипеле хăçан пулнă
Çумăр çума чарăнни.

“Хăмăр куçăм, мăшăр куçăм,
Куççуль тăкма чарăн-ха” –
Тенипеле хăçан пулнă
Куççуль юхма чарăнни.

Çумăр çуни-тăкăнни –
Тăпра хытса каясран,
Тымар типсе ларасран,
Çĕр çурăлса каясран.

Куççуль юхни-тăкăнни –
Чĕре хытса ларасран,
Кăмăл хăрса каясран,
Чун хуçăлса анасран...

*18.09.02.*

# САС КАЯТЬ...

*2000-2003 çç.*

## НИКАМА ТА КАЛАМАС

Курас килет, курас килет,
Пĕр сана курас килет.
Савас килет, савас килет
Пĕр сана савас килет.

Х.Ю: Сана калас сăмахăма,
Никама та каламас,
Сансăр пуçне
Никама та юратмас.

Савни килет, савни килет,
Хирĕç чупассăм килет.
Савни пĕлет, савни пĕлет,
Эпĕ кĕтнине пĕлет.

Х.Ю.

Шăрантарса тăри юрлать,
Ман чĕрем те юр юрлать.
Чĕре туять, чунăм туять,
Савни мана юрататъ.

Х.Ю.

*03.02.02.*

## АЙ, УЛМИ, САР УЛМИ

Вăхăт иртет, вăхăт иртет,
Вăхăт васкаса иртет,
Ĕмĕр иртет, ĕмĕр иртет,
Лайăх пурăнас килет.

Х.Ю: Хăмла çырли, çĕр çырли,
Вунçиччĕри хĕрĕсем,
Ай, улми, сар улми
Çур ĕмĕре çитнисем.
Пиçсе çитнĕ улмине
Савнă мăшăр çитĕр-и,
Ай, улми, сар улми
Тути тутлă пултăр-и?

Çеçке çурнă çутă вăхăт,
Çамрăк вăхăт лайăхчĕ,
Пиçсе çитнĕ савăк вăхăт
Тата лайăх пултăрччĕ.

Х.Ю.

Иртсе кайнă вăхăчĕсем
Хĕвелтухăç шевлисем,
Çитсе тăнă вăхăчĕсем
Ăшă сывлăм шăрçисем.

Х.Ю.

*14.03.02.*

# ТЕК ЮРАТМАСТӐП

Ӑҫтан асилтӗн, кая юлса килтӗн,
Кӑвар сапса пӑхатӑн куҫӑмран,
Ӑҫта ҫӳрерӗн, кампа ҫӳрерӗн,
Сана тӗртсех кӑлартӑм чунӑмран.

Х.Ю: Шанмастӑп, хӑть чупту, хӑть ытала,
Хӑть йӑпӑлтат, хӑть кӑшкӑр, ан ятла,
Тек юратмастӑп, эп качча тухатӑп,
Пултараймастӑп мӑшӑра улталама,
Ӑна эп сӑмах панӑ ӗмӗр юратма.
Кай, кай, сана валли урӑххи нумай.

Ӑҫтан асилтӗн, кая юлса килтӗн,
Епле хӑятӑн каҫару ыйтма,
Татах суятӑн, каллех суятӑн,
Текех пултараймастӑп каҫарма.

Х.Ю.

Ӑҫтан асилтӗн, кая юлса килтӗн,
Тархасласах ыйтатӑн таврӑнма,
Кампа ҫӳренӗ, кампа киленнӗ
Сунатӑп ҫавӑнпах мӑшӑрланма.

Х.Ю.

*22.02.02.*

# АХ, САРӐ РОЗА

Пӗрремӗш хут, эс астӑватӑн-и,
Мана эс сарӑ роза парнелерӗн,
Эс – сарӑ роза шанчӑк паракан,
Чипер чечек вӑл, йышӑнсамччӗ терӗн.

Х.Ю: Ах, сарӑ роза,ах, сарӑ роза,
Эс уйрӑлу, куççуль чечекӗ теççӗ.
Ах, сарӑ роза, ах, сарӑ роза
Чӑн савнине сана парнелемеççӗ.

Пӗрремӗш хут, эс астӑватӑн-и,
Эп сар чечеклӗ шурӑ кӗпепеччӗ,
Чуптурӑн вӑтанса, пӑчӑртаса,
Хӗвел пӑхатчӗ, çумӑр ӳккелетчӗ.

Х.Ю.

Пӗрремӗш хут, эс астӑватӑн-и,
Çыру илсессӗн, эпӗ мӗн сӑнарӑм,
Конверт çинче те сарӑ чечексем:
"Пӗртен-пӗрехӗм, пурнӑçӑм, хӗвелӗм".

Х.Ю.

Юлашки хут, эс астӑватӑн-и,
Уйра кӑвайт чӗртсе çунтарнӑçемӗн
Çунса хуралчӗç сарӑ сӑмахсем,
Эс шанчӑклӑ пулмарӑн, улталарӑн.

Х.Ю.

*22.02.02.*



*Атте, Альбина, эпӗ, анне. 1957 çул*

## ЁМĔРЛЕТПĔР ЁМĔРЕ

Çуралатпăр тĕнчене
Атте-анне килĕнче,
Ёмĕрлетпĕр ёмĕре
Атте-анне пилĕпе.

Х.Ю: Атте-анне сăмахĕнчен
Тухас марччĕ,
Атте-анне ырă ятне
Ярас марччĕ.

Аттене итлемелле,
Аннене итлемелле,
Чунтан каланисене
Чĕре варне илмелле.

Х.Ю.

Аттене юратмалла,
Аннене юратмалла,
Хисеп туса, чыс туса
Кăмăл тусах тăмалла.

Х.Ю.

Аттене тав тумалла,
Аннене тав тумалла,
Вĕсене савăнтарма
Лайăх пурнăç тумалла.

Х.Ю.

*03.02.02.*

## АН ЮРЛА-ХА, АН ЮРЛА

Ан юрла-ха, ан юрла,
Хурлă юрă ман умра.
Каю шăтнă улăха
Парнеле хăв юрруна.

Х.Ю: "Йăпатма пĕлмерĕм-ши,
Юратма пĕлмерĕм-ши,
Савнă тусăм, эп сана
Юрама пĕлмерĕм-ши?"

Ан юрла-ха, ан юрла,
Хурлă юрă ман умра.
Çулçă тăкнă юмана
Парнеле хăв юрруна.

Х.Ю.

Ан юрла-ха, ан юрла,
Хурлă юрă ман умра.
Типсе ларнă çăлкуçа
Парнеле хăв юрруна.

Х.Ю.

Ан юрла-ха, ан юрла,
Хурлă юрă ман умра.
Иртсе кайнă вăхăта
Тавăраймăн каялла.

Х.Ю: Ан юрла-ха, ан юрла
Хурлă юрă ман умра.

Эс каланă сăмахсем –
Çил кустарнă туйăмсем.

*25.04.02.*

## ĂÇТА ЭС?

Эс çӳретĕн аякра,
Эп ишетĕп тунсăхра.
Ăшă хумлă кăмăл-туйăм
Пăшăлтатать ăшăмра:

Х.Ю: Ăçта эс, ăçта эс,
Ăçта эс, ăçта эс?
Ман сана курас килет,
Юнашар пулас килет,
Ыталанса-чуптăванса
Пĕрлешсе пурнас килет.

Уй хĕрринчи айлăмра
Тунсăхлать кăтра йăмра,
Çулçисемпе шелтĕртетсе
Шĕпĕртетет çумăрла:

Х.Ю.

Хĕрсе кайнă туйăма
Сивĕ шывпа сапас-и,
Çерем шăтнă сукмак çине
Кĕтсе илме тухас-и?

Х.Ю.

## КАҪАР МАНА

Ах, килессу килмест пулсан,
Епле ҫула тухан?
Тухсассăн та, каяс килми
Аран-аран утан.
Ах, ан та кил эппин савни,
Каҫар мана, каҫар.

Ах, курассу килмест пулсан,
Епле куҫран пăхан?
Пăхсассăн та, курас килми
Куҫна куҫран тартан.
Ах, ан пăхсам эппин, савни,
Каҫар мана, каҫар.

Ах, савассу килмест пулсан,
Епле, епле саван?
Асапăма курса тăрса
Епле тёртсе яран?
Ах, тёртсе яр эппин, савни.

Тен, килён ман пата кайран, кайран,
Эп ҫутă тёнчерен кайсан, кайсан.
Кулянăн-ши, кулянăн-ши,
Йывăр тăпру ҫăмăл пултăр
Каҫарсамччё тейён-ши?..

Эп пурăнăп сана кётсе, кётсе,
Илемлё ҫутă тӳпере, лере.
Унта та кирлё пулмăп эп сана,
Унта та юхё ăш куҫҫуль кăна
Сана курас, сана курас килнипе,
Сана савас, сана савас килнипе...
Савни, савни, чунăм варли... Ай...

## САС КАЯТЬ

Ахрат çырми питĕ тарăн,
Ӳкес марччĕ ăнсăртран.
Пĕри пĕртте шеллемерĕ,
Тĕртсе ячĕ çурăмран.

Х.Ю: Сас каять, сас каять,
Тĕнче тăрăх саланать.
Сас каять, сас каять,
Тĕнче тавра çаврăнать.

Ӳкрĕм пулас, ӳкрĕм пулас,
Еплерех çӳле тухас,
Сас парас-и, шăп ларас-и,
Пулăшу камран ыйтас?

Х.Ю.

Çумăр çăвать, хĕвел пăхать,
Асамат кĕперь тухать,
Çичĕ тĕслĕ картлашкине
Ман патăма антарать.

Х.Ю.

Кăмăл уçă, сассăм уçă,
Çĕнĕ юрă çыранать,
Çут тĕнчене çутă куншăн
Таймапуçăн тав тăвать.

*24.03.02.*



*Юратнӑ атте –*
*ӗҫпе вӑрҫӑ ветеранӗ, Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав,*
*тата Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑн*
*II- мӗш степенлӗ орденӗсен кавалерӗ*
*Василий Степанович Степанов*

# ВĔÇЕН КАЙĂК ПУЛНĂ ПУЛСАН

*Аттене – 75 çулпа саламласа*

Вĕçен кайăк пулнă пулсан,
Вĕçĕттĕм те кайăттăм,
Атте лартнă йăмра çине
Анăттăм та ларăттăм.

Х.Ю: Туратне ыталăттăм,
Çулçине чуптăвăттăм,
Атте урама тухсассăн
Çуммăн вĕçсе пырăттăм.

Пилеш кайăк пулнă пулсан,
Вĕçĕттĕм те кайăттăм,
Анне лартнă пилеш çине
Анăттăм та ларăттăм.

Х.Ю: Туратне ыталăттăм,
Çулçине чуптăвăттăм,
Анне пахчана тухсассăн
Йăран тăрăх чупăттăм.

Чĕкеç кайăк пулнă пулсан,
Вĕçĕттĕм те кайăттăм,
Тăван кĕтес йĕри-тавра
Çичĕ çавра тăвăттăм.

Х.Ю: Чĕвĕл-чĕвĕл пуплеме
Çăлкуç патне вĕçĕттĕм,
Атте-анне сывлăхĕшĕн
Çичĕ сыпкăм ĕçĕттĕм.

Йăмрине ыталăттăм,
Пилешне чуптăвăттăм,
Çĕрне-шывне ать-аннене
Пăхса тăмах ыйтăттăм.

*27.02.00.*

## ЧĂН СĂМАХĂН СУЙИ ÇУК

Чăн сăмахăн суйи çук, çук, çук, çук.
Суеçтерсе калас çук, çук, çук, çук.
Ма тĕл пултăм-ши сана, эп сана,
Унтанпа ман чĕремре эс кăна.

Х.Ю: Юратап, юратап,
Юратап, юратап,
Эсĕ мана савмасан та,
Санах савса пурăнап.

Чăн сăмахăн суйи çук, çук, çук, çук,
Суеçтерсе калас çук, çук, çук, çук.
Ăшăмра çунать пушар, шĕл кăвар,
Куртăм мар-и-ха кĕтрет е типшар?

Х.Ю.

Чăн сăмахăн суйи çук, çук, çук, çук,
Суеçтерсе калас çук, çук, çук, çук.
Тек кураймăп-ши сана нихăçан,
Ĕненетĕп, эс часах таврăнан.

Х.Ю.

## ИРТСЕ КАЙӖҪ ӖМӖРСЕМ

Ăш кăмăлăм ăҫта-ши,
Ăҫта кайса шырам-ши?
Ҫын усалӗ тапăнчӗ,
Сивӗтрӗ те, савăнчӗ.
Канлӗ кунсем ăҫта-ши,
Ăҫта кайса шырам-ши?
Кансӗр кунсем сырăнчӗҫ,
Шурлăх ăшне ывăтрӗҫ.

Тӗксӗм сăна ҫутатма
Вăйăм-халăм ҫиттӗрччӗ,
Савăк куна ҫавăрма
Савăк вăхăт килтӗрччӗ.
Ăрăскалăм пулинччӗ,
Ӗмӗр ҫумра ҫӳринччӗ,
Мăшăр лайăх пулинччӗ,
Ӗмӗр ырлăх кӳринччӗ.

Тăванăмсем, тусăмсем,
Айтăр мирлӗ пурăнар,
Хур тăвакан ютсене
Ҫывăхлатма кирлӗ мар.
Вӗҫсе кайӗҫ кайăксем,
Ӳксе юлӗҫ тӗкӗсем,
Иртсе кайӗҫ ӗмӗрсем,
Тăрса юлӗҫ кунӗсем.

## ЭС ÇУРАЛНĂ КУН ПАЯН

Эс çуралнă кун паян,
Мĕнле пурăнан, тăван?
Килсе каяс терĕмĕр,
Хăна пулас терĕмĕр.

Х.Ю: Ачасем те мăнуксем –
Савăнăç кӳрекенсем.
Хамăр пек ĕçчен, патвар,
Çыпăçуллă та хастар.

Сар тĕпеле ларар-и,
Савăк сăмах калар-и,
Купăс тăсса ярар-и,
Шăрантарса юрлар-и?

Х.Ю.

Ура çине тăрар-и,
Урай варне тухар-и,
Тăпăртатса ташлар-и,
Çан-çурăма хуçар-и?

Х.Ю.

# АН КУЛЯНСАМ, ТĂВАНĂМ

Ан кулянсам, тăванăам, ан кулян,
Такам кӳрентернишĕн ан хурлан,
Каçар, каçарнине мĕскер çитет,
Хурри тухса кайсан, ырри килет.

Ан кулянсам, тăванăм, ан кулян,
Ĕçсем ăнсах пыманшăн ан хурлан.
Телей тени вăл тавралла çӳрет,
Кĕтме пĕлсессĕн, ăнăçу килет.

Ан кулянсам, тăванăм, ан кулян,
Кунçул чупса иртнишĕн ан хурлан.
Шăпа тени вăл йĕркине пĕлет,
Курмаллине курмах, чăтмах тивет.

Ан кулянсам, тăванăм, ан кулян,
Хĕр-ывăл аякришĕн ан хурлан.
Вĕсем киле килсен, чун хĕпĕртет,
Вучах çунать пулсан, тĕпел çиçет.

Ача-пăча, тăван сума сусан,
Чупса ĕçлес, вĕçсе çӳрес килет.
Савăнса юл, тăван, савăнса юл,
Телейлĕ пул, тăван, телейлĕ пул.



*Юратнă анне –*
*ĕçпе вăрçă ветеранĕ, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орден кавалерĕ*
*Александра Андреевна Степанова*

# КĔР ТЕ ИРТРĔ ПУЛМАЛЛА

*Аннене – 75 çулпа саламласа*

Хура тумлă вăрмана
Сывлăх сунса кĕретĕп,
Çулçă тăкнă йывăççене
Ытамласа илетĕп.

Х.Ю: Кĕр те иртрĕ пулмалла,
Хĕл те çитет пулмалла,
Çутă çуркунне çитсессĕн
Чакăр папка çурмалла,
Турат çумне турат хушса
Каш-кашласа лармалла.

Тĕксĕмленнĕ улăха
Сывлăх сунма анатăп,
Пуçне пĕкнĕ курăксене
Ăшă сăмах калатăп.

Х.Ю: Кĕр те иртрĕ пулмалла,
Хĕл те çитет пулмалла,
Çутă çуркунне çитсессĕн
Чакăр папка çурмалла,
Чечекленсе, илемленсе
Йăлтăртатса лармалла.

Чун туртакан кил-çурта
Киле-килех тăратăп,
Шурă çÿçлĕ ать-аннене
Ырлăх-сывлăх сунатăп.

Х.Ю: Кĕр те иртрĕ пулмалла,
Хĕл те çитет пулмалла,

Çутă çуркунне çитсессĕн
Сад пахчине тухмалла,
Ачăрсемпе, мăнуксемпе
Пахча-çимĕç лартмалла.
Сар тĕпеле пуçтарăнса
Кĕрекене лармалла,
Сар сăрине сыпа-сыпа
Юррине юрламалла.
Авкаланса-хуçкаланса
Ташшине ташламалла,
Çут тĕнчери ыр пурнăçа
Тав туса пурăнмалла.

Кăкăр тулли кăмăлсем,
Чĕре тулли туйăмсем,
Ĕмĕр-ĕмĕр сывă пулччĕр
Хаклă атте-аннесем.
Ĕмĕр-ĕмĕр сывă пулччĕр
Хаклă атте-аннесем.

*27.05.01.*

# ПУРӐНМАЛЛА

Кил кунта, кай кунтан –
Ҫам тӑван, кам тӑшман?
Унталла, кунталла –
Ӑҫталла каймалла?

Х.Ю: Апла та капла, аптӑрамалла,
Мӗскер тумалла?
Шухӑшламалла:
Пурӑнмалла – малалла,
Пурӑнмалла.

Куҫ курми тӗттӗме
Куҫ ҫути ҫутатать,
Тӗмескеллӗ ҫула
Ура тӗпь якатать.

Х.Ю.

Хӗвелпе хӗретсе,
Ҫумӑрпа ислетсе,
Ҫилӗпе типӗтсе
Тӗлӗнтерчӗ тӗнче.

Х.Ю.

Аякка пӑхмалла,
Аякка утмалла,
Малалла пурӑнма
Ырӑ вӑй пухмалла.

Х.Ю.

## ХУРА ВĂРМАН КАШЛАТАТЬ

Йăнăш пулчĕ, йăнăш пулчĕ,
Ăçта кайса хумалла,
Такăр çултан пăрăнсассăн
Çĕтсе кайрăм пулмалла.
Хура çырла, хура çырла
Çуккă пирĕн пахчара,
Ун ӳсесси, ун пиçесси
Хыр-чăрăшлă вăрманта.

Хура çĕлен, хура çĕлен
Ан чашăртат ман умра,
Ан тив мана, ан тив мана
Айăп çук сан умăнта.
Пĕрчĕн-пĕрчĕн хура çырла
Таткаласа çиетĕп,
Пĕлнĕ-пĕлмен çулпа утса
Ĕсĕклесе йĕретĕп.

Сарă кайăк, шăпчăк кайăк
Ма чĕнмесĕр ларатăр,
Кĕркуннепе пуçтарăнса
Ăçта тухса каятăр?
Итлесен те илтĕнмеççĕ
Илтес килнĕ сасăсем,
Хулпуççинчен уртăнаççĕ
Урăм-сурăм шухăшсем.

Хура вăрман кашлатать,
Хура пĕлĕт явăнать,
Эй, Пӳлĕхçĕ...

## ЭСЁ ПИТЁ ИНҪЕТРЕ

Эсӗ питӗ инҫетре,
Пирӗн хушӑра тӗтре:
Сӑрт-тусем, юхан шывсем,
Пушхирсем, сӗм вӑрмансем.

Х.Ю:Нихӑҫан тӗл пулас ҫук,
Ҫумма ҫуммӑн тӑрас ҫук,
Ыталанса,чуптӑвӑнса,
Савӑшӑнса курас ҫук.
Ҫырусем – шур пӗлӗтсем,
Вӗҫӗмсӗр вӗҫекенсем,
Ҫырусем – ҫут ҫӑлтӑрсем,
Вӗҫӗмсӗр ҫунакансем...

Эсӗ питӗ инҫетре,
Асилӳ сӗре хитре:
Лӑпкӑн-лӑпкӑн калаҫни,
Ӑшшӑн-ӑшшӑн йӑл кулни.

Х.Ю.

Эсӗ питӗ инҫетре,
Инҫетре те – чӗремре.
Кӗтмен ҫӗртен паллашни
Мӗне кирлӗ пулчӗ-ши?

Х.Ю.

Курнӑҫаймӑпӑр тепре,
Пирӗн хушӑра тӗтре.
Ҫӳллӗ тӗтре ӑшӗнче
Икӗ тӗнче варринче:
Икӗ ҫулӑм ялкӑшать,
Пӗр ҫӗрелле варкӑшать,
Ыталанса, чуптӑвӑнса,
Савӑшӑнса аташать.

Эй, сăрт-ту, пушă хир,
Сĕм вăрман, çеçен хир,
Туятăр-ши эсир,
Çулăмĕсем – эпир.

Х.Ю: Нихăçан тĕл пулас çук,
Çумма çуммăн тăрас çук,
Ыталанса, чуптăвăнса,
Савăшăнса курас çук.
Çырусем...

## МАНА КУРАС КИЛСЕ КАЙСАН

Мана курас килсе кайсан,
Çав териех тунсăхласан,
Пĕрре ирпе шăнкăравла,
Тепре каçпа шăнкăравла,
Илĕртмĕш сăмахсем кала.
Кала, кала, тивĕртмелле кала.

Мана курас килсе кайсан,
Çав териех тунсăхласан,
Çыру çырма та пултаран,
Ўкĕтлеме те ан вăтан,
Тен, кăмăла та çавăран.
Çыру, çыру çырмашкăн çук чару.

Мана курас килсе кайсан,
Çав териех тунсăхласан,
Çурт умĕпе иртсе çӳре,
Тен, тухăп уçăлма çĕрле,
Тен, утса кайăпăр пĕрле.
Çӳре, çӳре, пулас килсен пĕрле.

# ХĂТЬ ТЕ КАМА ĂШĂТ

Хăть те кама ăшăт,
Хăть те кампа ăшăн,
Кĕвĕçместĕп, кӳренместĕп,
Пурпĕрех халь маншăн.
Сивĕ кунсем иртрĕç,
Ăшă кунсем çитрĕç,
Юрлă-пăрлă çумăрĕсем
Пуçăм çинех ӳкрĕç.

Хăть те кампа ăшăн,
Хăть те кама ăшăт,
Тĕпĕртетсе иртсе кайрĕ
Савăшланнă вăхăт.
Çыранпа чупатăп,
Атăла чăматăп,
Айлĕ-майлĕ йăнăшсенчен
Тасалса тухатăп.

Хăть те кама ăшăт,
Хăть те кампа ăшăн,
Çӳреместĕп тек салхуллăн
Ан тивейтĕр сулхăн.
Эп сана юратнă,
Кăмăла шăратнă,
Сăн-питĕме кĕл шывĕпе
Шӳтерсе шуратнă.

## КЁРЕС МАРЧЧĔ ÇЫЛĂХА

Хăнана пырсамччĕ терĕм,
Пыраймастăп терĕн.
Чĕнтĕм-чĕнтĕм, чĕнтĕм-чĕнтĕм,
Кĕтрĕм-кĕтрĕм, кĕтрĕм-кĕтрĕм,
Кĕтсе илеймерĕм.

Х.Ю: О! Ха-а-ха, ох-ха-ха!
Юлас марччĕ ухмаха.
Уни-куни арпашăнса
Кĕрес марччĕ çылăха.
Ий-йа, ий-йа çав.

Улаха каяр-и терĕм,
Каяймастăп терĕн.
Чĕнтĕм-чĕнтĕм, чĕнтĕм-чĕнтĕм,
Кĕтрĕм-кĕтрĕм, кĕтрĕм-кĕтрĕм,
Кĕтсе илеймерĕм.

Х.Ю.

Хĕрхенесшĕн мар-и терĕм,
Хĕрхенместĕп терĕн.
Хĕрлĕхен çырли пуçтартăм,
Кучченеç тума васкарăм,
Сĕнтĕм, эс илмерĕн.

Х.Ю.

Эп сана саватăп терĕм,
Саваймастăп терĕн.
Ах, ытла хитре суятăн,
Савăшу вăййи вылятăн,
Альчăхса кулатăн.

Х.Ю.

# ХӖР КУРТӐМ

Хӗр куртӑм, хӗр куртӑм,
Ашшӗпе те ятлаҫать.
Хӗр куртӑм, хӗр куртӑм,
Амӑшпе те харкашать.
Урлӑ-пирлӗ урмӑшать,
Йӑкӑл-якӑл янрашать.

Хӗр куртӑм, хӗр куртӑм,
Ӗнер – кӑтра Ванюшпа.
Хӗр куртӑм, хӗр куртӑм,
Паян – кукша Алюшпа.
Такама та ҫыпӑҫать,
Такампа та явӑҫать.

Хӗр куртӑм, хӗр куртӑм,
Чипер хӗрпе паллашас.
Хӗр куртӑм, хӗр куртӑм,
Чипер ҫемье ҫавӑрас.
Намӑссӑрпа ҫыхланса
Ҫиес марччӗ пурнӑҫа.

Намӑс тӳмми вӗҫерӗнни
Кӑлтӑр-кӑлтӑр кустарать,
Намӑс тӳмми талса ӳкни
Ҫынна намӑс кӑтартать.
Усал хӗрпе утас мар,
Хамӑр ята ярас мар.

## ÇĔМĔРТ ЙЫВĂÇ СĔРЕ ХИТРЕ

Шурă Атăл, шурă Атăл,
Шурă Атăл хумханать.
Савни, сана аса илсен
Çамрăк чунăм хурланать.
Уйăх тăлăх, Уйăх тăлăх
Çӳллĕ-çӳллĕ тӳпере,
Савни, эп те сансăр тăлăх
Çакă çутă тĕнчере.

Икĕ çыран пулман пулсан
Юхан шывĕ юхмĕччĕ,
Савни, эсĕ çумра пулсан,
Хурланасси пулмĕччĕ.
Атăл урлă, Атăл урлă
Урлă утса каçма çук.
Савни хыççăн, савни хыççăн
Хăвaласа çӳрес çук.

Хăмла çырли, хурăн çырли
Татса килтĕм вăрмантан,
Савни, мана асилетни,
Асилетни ăнсăртран.
Шурă Атăл, шурă Атăл,
Шурă Атăл хумханать.
Шурă хумĕ, шурă хумĕ,
Манпала пĕрле юрлать.

Çĕмĕрт йывăç сĕре хитре
Шур пĕркенчĕк айĕнче,
Çутă тĕнче сĕре хитре
Чунăм савни çумĕнче.

## ПИРĔН ХУШĂРА

Пирĕн хушăра – çиçĕмлĕ тӳпе,
Пирĕн хушăра – Уйăхпа Хĕвел,
Пирĕн хушăра – хуçăлнă телей,
Пирĕн хушăра – татăлнă мехел.

Х.Ю: Вĕçсе каçма ирĕк çук,
Сиксе каçма ирĕк çук,
Ирĕк панă пулсассăнах
Эпĕр уйрăлас та çук.
Каймаллатчĕ тавралла,
Çулĕ çук çав малалла.

Пирĕн хушăра – сĕмсĕр чăтлăхсем,
Пирĕн хушăра – авăрлă шывсем,
Пирĕн хушăра – суккăр пушхирсем,
Пирĕн хушăра – чуллă сăрт-тусем.

Х.Ю.

Пирĕн хушăра – çичĕ пин сăмах,
Пирĕн хушăра – ӳпĕннĕ çăтмах,
Пирĕн хушăра – сĕрĕмлĕ тĕтре,
Пирĕн хушăра – шанчăксăр Тĕнче.

Х.Ю.

## ТЕК НИМ ТЕ МАР

Чуптусах – юрататăп тени,
Кăшкăрсах – кураймастăп тени.

Х.Ю: Тек ним те мар,тек ним те мар,
Мана тек ним те, ним те кирлĕ мар.
Кĕлленнĕ вучахра çатăртатмаç кăвар,
Кăвайчĕ çуннă-çуннă, çуннă та
Чăлт! сўннĕ...

Чуптусах – эсĕ манăн тени,
Кăшкăрсах – çичĕ ют эс тени.

Х.Ю.

Чуптусах – ăшшăн ыталани,
Кăшкăрсах – сиввĕн тĕртсе яни.

Х.Ю.

Чуптусах – каçарсамччĕ тени,
Кăшкăрсах – йăнăш пулчĕ тени.

Х.Ю.

## ÇУХАТМАСТĂП ТЕРĔН-ИМ?

Çаран çинчи чечекне
Татса илме вăй çук-им,
Суйла-суйла тиркеме
Каччă валли хĕр çук-им?

Х.Ю: Хăваласа хуса çитсе
Ыталассу килчĕ-и,
Чăмăртаса ярса тытсан
Çухатмастăп терĕн-и?

Сарри чăтать терĕн пуль,
Хури кĕтет терĕн пуль,
Çырă хĕрпе çавтăнса
Вĕçкĕнленес терĕн пуль.

Х.Ю.

Çырри çырă каччине
Çыхса хунă хăй çумне,
Сан пек вĕлтĕр-вальтĕре
Ярас çук вăл яхăнне.

Х.Ю.

Утни уссăр пулчĕ пуль,
Чупни уссăр пулчĕ пуль,
Сар чечек пек саррине
Ахалех тиркерĕн пуль.

Х.Ю.

Хăмăрри, шурри, хĕрли,
Симĕсси те кăвакки,
Миçе тĕслĕ çӳçлĕ пуç,
Алчăрать çав каччă куç.

## КАЛАМА ХĂЙМАСТĂН ПУЛЬ

Мĕншĕн килтĕн, мĕншĕн килтĕн,
Мĕншĕн кайрăн, мĕншĕн кайрăн?
Мĕншĕн куртăм, мĕншĕн куртăм,
Мĕншĕн çунтăм, мĕншĕн çунтăм?

Х.Ю: Тĕлĕке килетĕн,
Çуммăнах çӳретĕн,
Пĕр сăмах чĕнместĕн,
Ытамна илместĕн.
Тек мана савмастăн пуль,
Тĕлĕкре те чăннине
Калама хăймастăн пуль.
"Юрататăп" теме çăмăл пуль,
"Юратмастăп" теме йывăр пуль.

Манаймастăп, манаймастăп,
Йăлăнсах савма ыйтмастăп.
Эп сана айăпламастăп,
Эп сана ăнланаймастăп.

Х.Ю.

# КĔМĔЛ КĔПЕР УРЛĂ

Тĕттĕм каҫпа килтĕм,
Эс кĕтме тухмарăн,
Тĕттĕм ирпе кайрăм
Ăсатса ямарăн.
Хăлха ҫакки ҫакрăм,
Ăнсăртран ҫухатрăм,
Шантăм сана, шантăм,
Хуҫăлса амантăм.

Аслатиллĕ тăвăл,
Витĕр витнĕ кăмăл.
Кукăр-макăр ҫиҫĕм –
Сапаланчĕ ҫӳҫĕм.
Кĕмĕл кĕпер урлă
Хурлăха пăрахрăм,
Кĕмĕл ҫĕрĕ витĕр
Янăрарĕ ахрăм.

Ҫичĕ ҫул иртсессĕн
Кĕмĕл кĕпер ӳкрĕ,
Ӳкрĕ те арканчĕ,
Вакланса саланчĕ.
Кĕмĕл ҫĕрĕ витĕр
Аякка пăхатăп,
Сан сăнна куратăп,
Куҫăма хуплатăп.

Пуҫăм мар, тĕнче пуль
Ҫаврăнать пуҫхĕрлĕ,
Арпашăнса кайрĕҫ
Шухăшсем тем тĕрлĕ.

## МАНА КАЧЧА ТУХ

Тух-ха ёнтĕ, тух ёнтĕ,
Кĕтетĕп сана.
Алла аллăн çавтăнса
Каяс килет улăха,
Курăк айне пытанса
Йăпшăнмалла выляма.

Х.Ю: Тух-ха ёнтĕ, тух,
Укăлчана тух.
Маруç, илтетĕн-и?

Тух-ха ёнтĕ, тух ёнтĕ,
Кĕтетĕп сана.
Алла аллăн çавтăнса
Каяс килет вăрмана,
Шĕшкĕ айне пытанса
Мăйăр катса тĕш тума.

Х.Ю.

Тух-ха ёнтĕ, тух ёнтĕ,
Кĕтетĕп сана.
Алла аллăн çавтăнса
Тăрас килет тĕпеле,
Килтĕм сана çураçма,
Туй тумашкăн калаçма.

Х.Ю: Тух-ха ёнтĕ, тух,
Мана качча тух.
Маруç, илтетĕн-и?
Асту сана!..

## АЙ, КУРĂКСЕМ, ЧЕЧЕКСЕМ

Симĕс курăк хушшинче
Темĕн тĕслĕ чечексем,
Çамрăк пуçăм çийĕнче
Темĕн тĕрлĕ шухăшсем.

Х.Ю: Ай, курăксем, чечексем,
Ай, шухăшсем, ĕмĕтсем.
Çил еккипе тайла-тайла
Ывăнмаççĕ-ши вĕсем?

Çырла татма каймалла,
Пурак йăтса утмалла,
Таптас килмен курăкне
Таптаса хăвармалла.

Х.Ю.

Утă çулма тухмалла,
Çава йăтса утмалла,
Кушăрканнă курăкне
Капанласа хумалла.

Х.Ю: Ай, курăксем, чечексем,
Ай, шухăшсем, ĕмĕтсем.
Çава çулса пăрахнишĕн
Кӳренмеççĕ-ши вĕсем?

# ÇĔНĔ ÇУЛ ЮРРИ

Çĕнĕ юр ӳкет,çĕнĕ çил вĕрет.
Çутă тĕнчене Çĕнĕ Çул килет.
Çĕнĕ туйăмсем, çĕнĕ шухăшсем,
Çĕнĕ ĕмĕтсем, çĕнĕ пулăмсем.

Х.Ю: Сик тух, сик тух, Çĕнĕ Çул, Çĕнĕ Çул,
Сыв пул, сыв пул, кивĕ çул, кивĕ çул.
Хĕл, хĕл, Хĕл мучипе юр, юр, Юрпике
Пухрĕç вĕр-çĕнĕ, вĕр! çĕнĕ кĕреке –
Çĕнĕ юрă юрлама, çĕнĕ çăкăр пуçлама,
Çĕнĕ ташă ташлама, çĕнĕ сăвă калама.
Кĕрекийĕ – аслă, хăнисем – хаваслă,
Кăмăл – мерченпе ахах,
Çĕнĕ Çулăмăр, тавах!

Юлташсем, туссем, хаклă тăвансем,
Çĕнелсех пырать пирĕн ĕмĕрсем.
Ачасем, салам! Çамрăксем, салам!
Ватăсем, салам! Çĕнĕ Çул, салам!

Х.Ю.

## ШĂНКĂРАВЛА

Кунçул иртсе пырать шавла-шавла,
Шăнкăравла ман пата, шăнкăравла.
Шухăш сан таврах вĕçсе çӳрет,
Сан çумнах ачашшăн сĕртĕнет.
Шăнкăравла ман пата, шăнкăравла,
Кăшт кӳрентернишĕн ан хурла.

Х.Ю: А-ле, а-ле, а-ле, а-ле,
Унта-кунта çĕтсе çӳрен,
Уссăр вăхăт иртерен.
А-ле, а-ле!..
Ытла нумай кĕттерен.

Илĕртӳллĕн, лăпкăн сывла-сывла
Шăнкăравла ман пата, шăнкăравла.
Манса кай "Кĕтместĕп" тенине,
Асна ил савса чуптунине.
Шăнкăравла ман пата, шăнкăравла,
Кăшт кӳрентернишĕн ан хурла.

Х.Ю.

Каçаруллăн, ăшшăн кула-кула
Шăнкăравла ман пата, шăнкăравла.
Тунсăхласа çитнĕ ытамна
Кĕçĕрех эп хатĕр ыткăнма.
Шăнкăравла ман пата, шăнкăравла,
Кăшт кӳрентернишĕн ан хурла.

Х.Ю.

## ШӐНКӐР ТА ШӐНКӐР

Эп сана тупатӑп терӗн,
Мӗншӗн шырамастӑн,
Манпала эс тӗл пулма тен,
Вӑхӑт тупаймастӑн.

Х.Ю.: Шӑнкӑр та шӑнкӑр
Ҫӑл шыв юхать,
Тӑпӑр та тӑпӑр
Вӑхӑт юртать.

Эп сана тупатӑп терӗн,
Шантарма васкарӑн,
Васкаса каланипе тен,
Хӑвӑрт манса кайрӑн.

Х.Ю.

Эп сана тупатӑп терӗн,
Ҫулӗ аякра-и,
Тен, татах кӗтсе пӑхас-и,
Тен, кӗтес те мар-и?

Х.Ю.

## МАНСА КАЯЙМАСТĂП

Манса кайăп терĕм,
Манса кайăп терĕм,
Тунсăха шеллерĕм,
Юрă кĕвĕлерĕм.

Х.Ю.: Манса каяймастăп,
Манса каяймастăп,
Сана асилмесĕр
Пĕр кун пурнаймастăп.

Манса кайăп терĕм,
Манса кайăп терĕм,
Тунсăх çăлкуçне те
Чарма пĕлеймерĕм.

Х.Ю.

Манса кайăп терĕм,
Манса кайăп терĕм,
Тунсăх вучахне те
Сӳнтерме пĕлмерĕм.

Х.Ю.

Манса кайăп терĕм,
Манса кайăп терĕм,
Урăх каччăпа та
Çавтăнса çӳрерĕм.

Х.Ю.

Сана асилмесĕр
Пĕр кун пурнаймастăп,

Тем пек манас тесен те
Темшĕн манаймастăп,
Тусăм, тусăм, тусăм...

## АТĂЛ ТĂРĂХ

Атăл шывĕ шăпăлтатса
Хумĕпеле вăй вылять,
Эпĕр санпа калаçнине
Атăл тăрăх сапалать.

Х.Ю: Ах, савниçĕм, савниçĕм
Мĕншĕн уйрăлмалла-ши,
Мĕншĕн пире мăшăрланса
Пĕрле пулма çырман-ши?

Атăл хăви кăшăлтатса
Ăшă çилпе вăй вылять,
Эпĕр санпа калаçнине
Хăвалăхра сапалать.

Х.Ю.

Атăл çийĕн пĕлĕт юхать,
Иксĕмĕр çине пăхать,
Эпĕр санпа калаçнине
Тĕнче тăрăх сапалать.

Х.Ю.

# САНСĂР

Шурă юр пĕрчи ярăнса вĕçет,
Ярăнса вĕçет, сан çине ÿкет.

Х.Ю: Сансăр миçе кун,
Сансăр миçе каç,
Сансăр миçе çул
Тăсăлчĕ кунçул.
Чун-чĕрем ăшши
Эс пĕрре кăна,
Чун савни, чун савни,
Аса ил мана,
Аякран-и, çывăхран-и
Хаксăр хаклă сасна пар.
Кĕтеп, кĕтеп.

Çумăр чăмăркки сирпĕнсе ÿкет,
Сирпĕнсе ÿкет, шăппăн ĕсĕклет.

Х.Ю.

Шухă çил ачи шăхăртса вĕрет,
Шăхăртса вĕрет, сан тавра çÿрет.

Х.Ю.

Сансăр сывлăх çук, сансăр ырлăх çук,
Сансăр канăç çук, сансăр пурнăç çук.

Х.Ю.

## АЙ-ХАЙ, ТĂВАН

Ай-хай, тăван, ыр тăван
Килес тесех килтĕр-и,
Чăнах чунăр туртрĕ -и,
Туртрĕ-и?
Ай-хай, тăван, ыр тăван,
Юрлас тесех юрлатри,
Чăнах чунтан юрлатри,
Юрлатри?

Ай-хай, тăван, ыр тăван
Ташлас тесех ташлатри,
Чăнах чунтан ташлатри,
Ташлатри?
Ай-хай, тăван, ыр тăван,
Ыр кăмăлпах каятри,
Ӳлĕм килсех тăратри,
Тăратри?

Ай-хай, тăван, ыр тăван,
Çул куркипе тавăсси,
Чăнах пултăр чун ăшши,
Чун ăшши.
Ай-хай, тăван, ыр тăван,
Çут тĕнчере пурнасси,
Пĕр-пĕринпе савнасси,
Савнасси.

# АХХАЯС ТА МАХХАЯС

Тухрăм кайрăм акана –
Тулă-урпа ӳстерес.
Тухрăм кайрăм вырмана –
Тулă-урпа искĕрес.

Х.Ю: Тухрăм кайрăм авăна –
Тулă-урпа типĕтес.
Тухрăм кайрăм армана –
Тулă-урпа авăртас.
Кăрчамине йӳҫĕтес,
Хуплу, шаркку пĕҫерес,
Тус-тăвана пуҫтарас та
Хапăл туса хăналас.

Кĕтĕм кайрăм пахчана –
Пахча-ҫимĕҫ ӳстерес,
Кĕтĕм-кайрăм йăрана –
Пахча-ҫимĕҫ искĕрес.
Кĕтĕм кайрăм вăрмана
Ҫырла, кăмпа пуҫтарас,
Кĕтĕм кайрăм чăлана –
Катка-пичке истухас.
Тăварлас та сахăрлас,
Хĕл хырăмне тултарас,
Тус-тăвана пуҫтарас та
Хапăл туса хăналас.

Ай-хай, ырă тăвансем,
Иртсе ларăр тĕпеле,
Ай-хай, хаклă тăвансем
Хапăл тăвăр сĕтеле.

Çырла шывне тутанас,
Кăрчамине сыпкалас,
Кукăль-макăль çырткалас,
Сар тĕпеле çутатас.
Юрлама та пуçăнас,
Ташлама та тапратас,
Айлю-райлю-майлюрас та
Аххаяс та маххаяс.

## АЙ, ШУХĂШСЕМ-ĔМĔТСЕМ

Шăнкăртатса çӳреме
Çакрăм кĕмĕл шӳлкеме,
Шыв юррине итлеме
Тухрăм Атăл хĕррине.

Атăл çиййĕн çил ачи
Хут купăсне янратать,
Капăр тумлă хумсене
Вăй картинче çавăрать.

Шухăшласа тăмалăх,
Атăл хĕрри – хăвалăх.
Ай, шухăшсем-ĕмĕтсем –
Атăл хумĕн çилхисем.

# ЙЁЛЕ-ЙЕЛЮ КУÇÇУЛЁМ

*Çав тери хитре, вăйлă саслă*
*Альбина йăмăкăм ĕмĕрлĕхе*
*уйрăлса кайнăранпа*
*тăхăр кунне асăннă сăвă-кĕвĕ*

Кĕрен улăх урлă каçма
Шурă кĕпе тăхăнтăм,
Шухăшласа ута-ута
Тайкаланса ывăнтăм.

Х.Ю: Шинкки-шĕнкĕл шыв юхăмĕ –
Йĕле-йелю куççулĕм.
Ватăличчен пурăнасчĕ,
Пулăшсамччĕ, Турăçăм.

Ай, татас-и, татас мар-и
Ешĕл курăк илемне,
Тивес мар-и, хуçас мар-и
Шутсăр кĕске ĕмĕрне.

Х.Ю.

Вăрăм çӳçĕм, хура çӳçĕм
Вăштăр çилпе вĕлкĕшрĕ,
Кĕрен улăх илемĕсем
Куçа шартса тĕлкĕшрĕ.

## ПУРĂН ЁМĔРЕ

Çĕр пин юрăллă, çĕр пин сăвăллă,
Çĕр пин тĕрĕллĕ Чăваш çĕршывĕ.

Х.Ю: Пурăн ĕмĕре, çутă тĕнчере
Çĕр çинче, Хĕвел ытăмĕнче –
Çĕр пин юрăллă, çĕр пин сăвăллă
Çĕр пин тĕрĕллĕ Чăваш çĕршывĕ.

Халăх ырлăхĕ, халăх пурлăхĕ,
Халăх сумлăхĕ – тăван чĕлхемĕр.

Х.Ю: Пурăн ĕмĕре, çутă тĕнчере
Çĕр çинче, Хĕвел ытăмĕнче –
Халăх ырлăхĕ, халăх пурлăхĕ,
Халăх сумлăхĕ – тăван чĕлхемĕр.

Шурă Шупашкар, чаплă Шупашкар,
Атăлçи илемĕ – Шупашкарăм.

Х.Ю: Пурăн ĕмĕре, çутă тĕнчере
Çĕр çинче, Хĕвел ытăмĕнче –
Шурă Шупашкар, чаплă Шупашкар,
Чăвашъен мухтавĕ – Шупашкарăм.

# УЯВА УЯВ ПЕК ТӐВАР-И?

Уява уяв пек тӑвар-и,
Пӗр ҫавра юррине юрлар-и?
Юрлар-и те, юрлар-и те,
Саркаланса юрлар-и,
Шӑнкӑр-шӑнкӑр, шӑнкӑр-шӑнкӑр,
Шӑнкӑр шывӑн юхар-и?..

Уява уяв пек тӑвар-и,
Пӗр кана ташшине ташлар-и?
Ташлар-и те, ташлар-и те
Авкаланса ташлар-и,
Йӑкӑш-йӑкӑш шукаласа
Шукӑль сӑвӑ калар-и?..

Уява уяв пек тӑвар-и,
Кӑмӑла яри те уҫар-и?
Шӑкӑл-шӑкӑл, шӑкӑл-шӑкӑл
Шӑкӑлтатса ларар-и,
Пӗрне пӗри ырӑ сунса
Туслӑ, мирлӗ пурнар-и?..

# МĂКĂНЬ ЧЕЧЕК ÇУРĂЛЧĔ

*30 çул пĕрле пурăннине*
*уявланă май –*
*савнă мăшăрăма – Юрăна*

Тĕлпулу çĕкленчĕ тухăçран,
Паллаштарчĕ пире ăнсăртран.
Хыпса илтĕмĕр, кăвайтăн хĕмленсе,
Кĕтнине – кĕтсе илнишĕн тĕлĕнсе.

Х.Ю: Мăкăнь чечек çурăлчĕ,
Аякранах курăнчĕ.
Мăкăнь тĕслĕ çырлине те
Татаканĕ тупăнчĕ.

Именсе кайса чĕтренисем –
Вĕтĕр-вĕтĕр хĕлхем ташшисем.
Уйрăлас килмесĕр ытамланнисем –
Килĕшӳ тупса пĕрлешнĕ туйăмсем.

Х.Ю.

Кĕреке тулли хăна-вĕрле,
Тепĕр хĕрĕх, аллă çул пĕрле
Пурăнасчĕ ыр курса, телей курса,
Пĕр-пĕрне чунтан-вартан савса.

Х.Ю.

*29.04.02.*

## САВНӐ ШУПАШКАР

Ăçта кăна пулмарăм,
Мĕскер кăна курмарăм
Пурăнăçра.
Тăван хула илемĕ,
Тăван чĕлхе кĕрлевĕ –
Ялан асра.
Урамĕпе утатăп,
Çыран хĕрне тухатăп –
Епле аван.
Сылтăмалла пăхсан та,
Сулахая пăхсан та –
Хаклă тус-тăван.

Х.Ю: Шупашкарăм, Шупашкарăм,
Атăлçи илемĕ эсĕ
Шупашкарăм, савнă Шупашкар.
Чăвашсем те, вырăссем те,
Тутарсем те, марисем те,
Йышлă халăх, туслă пурăнар.

Юман-атте кашлатăр,
Çăка-анне юрлатăр
Вăрмансенче.
Тыр-пулĕ савăнтартăр,
Ĕçчен сасси янратăр
Уй-хирсенче.
Эп улăха анатăп,
Чечек çыххи пухатăп –
Епле хитре,
Пуçа тайса сĕнетĕп,

Ăна эп парнелетĕп
Атте-аннене.

Х.Ю.

Пăрахутпа килеççĕ,
Самолетпа вĕçеççĕ
Шупашкара,
Килсе курас тееççĕ,
Хăна пулас тееççĕ
Чăвашстанра.
Чăваш хули çĕклентĕр,
Чечеклĕн илемлентĕр
Çултан – çула,
Телей курса пурнар-и,
Хавхаланса утар-и
Малтан – малалла.

Х.Ю.

# ТĔРЛЕНЧĔКСЕМ

*2003 ç.*

# КАНТӐК ВИТӖР ПӐХСА...

Пӗр ҫӳллӗ ҫуртӑн
Кантӑк янахне чавсаласа,
Ал тупаньпе янахӑма таякласа
Урамалла пӑхса тӑратӑп.
Урам вӑл урамах,
Ҫӳлтен аялалла
Тинкернӗ куҫ умне курӑнакан
Ӳкерчӗксем – пайтах.

-1-

Кӑҫал кӗр кунӗсем хитре.
Ҫумӑрӗсем кӑш-каш ӳкеҫҫӗ-ха,
Пит лӳшкесех каймаҫҫӗ...

Паян чӗкеҫ вӗҫмеҫ,
Нивушлӗ ҫумӑр витӗр,
Каҫа хирӗҫ, ӗнер
Анаталла тапранчӗҫ-ши?
Ай, чӗпписе-ем,
Виҫ уйӑхри шӑпӑрлансем
Вӑшлаттараҫҫӗ пулӗ ҫунатне,
Ӑҫта ҫити ҫул тытнӑ-ши
Ашшӗпе амӑшӗ, ратне?..
Мӗнех? –
Ҫерҫи сиккелесе чӗриклетни,
Кулюккасем йӑраланса утни те
Тем пекех.
Сивве чӑтма пултарнӑшӑн
Мухтас пулать-и
Ҫерҫипе кулюккана?
Сивве чӑтма пултарайманшӑн та
Хурлама ҫук ман ирӗк
Йышлӑ ырӑ кайӑка...

Кайăка çеç-и, лĕпĕше те шел,
Вăл та вĕçет-çке аякка.
Çитес çĕре çитсен
Çинçелнĕ çунатне сипле-сиплех
Иртет пуль хаклă вăхăчĕ,
Çунатлă та, вĕçес пулать:
Унтан – кунта, кунтан – унта.
Эпир: "Пĕр чĕптĕм канăç çук" тени,
Вĕсеннипе шутлас пулсан? -
Çăвар уçма та намăс.

Килнĕ-килмен,
Ывăннине манса кайса
Юрра яраççĕ, э-эй, юрра яраççĕ-çке
Уйра та урамра,
Ешернĕ улăхра та вăрманта.
Те çичçĕр çитмĕл çаврăм кукăртаççĕ,
Те çичçĕр çитмĕл кукăр çавăраççĕ,
Шарлаттараççĕ-çке, шăрантараççĕ,
Кама валли, кам ячĕпе
Концерт лартаççĕ?..

Лĕпĕшĕсем те, те – савăннипен,
Кашни çеçкеллĕ курăк-чечеке
Чуппа тăваççĕ...

-2-

Ай, пĕлĕтсе-ем, вĕсем мана
Тинь каснă сурăх çăмь
Кăтрашкине аса илтерчĕç.

Урисене хĕреслесе çыхса
Сĕтел çине хурсан, сурăхĕсем
Ытла та хытă шуйланатчĕç.

Пуçне çӗкле-çӗкле,
Чӗтре-чӗтре куçран пăхатчӗç.
“Ай, пăтьăк-пăтьăк, ан хăра,
Тăрслаттарса чупкалама
Çăмăллăх парăпăр сана” -
Тесе, часрах ӗçле пуçлаттăм,
Паллă туса, ятарласа,
Сылтăм енне çивӗт çыхаттăм.

Çип арлама вӗренеймерӗм,
Асаннепе анне çăмран
Çип тунине пăхса лараттăм,
Йӗки тулсан, иккӗшӗнчен
Пӗрер çăмха илеттӗм те
Лараттăм лăпкăн пӗтӗрсе.
Алă тупань хӗрсе каятчӗ,
Чӗрçи çинче йӗке ташлатчӗ.

Хулăн алсыш, нуски, чăлха
Çыхса паратчӗç, мунчара –
Çемçе те ăшăрах пулма,
Эх, йăвалаттăмăр çавна-а...
Çӗнӗ çăматă тăхăнсан,
Чи малтанах килкартине
Тухаттăм, сурăхсем патне –
Шыв ӗçтерме, утă пама,
Çăмăл кăçатшăн тав тума.

-3-

Ав, пӗр ача, хăй аллинчи
Кулачăна хуçа-хуçа
Кайăксене персе парать.

Лешсем, тӗпренчӗкне сӑхма
Унӑн ури айнех чӑмаҫҫӗ.
Тӗк тӑракан мӑнукӗ е ачи
Ӗҫ тунине хӗрарӑм
Сӑнаса тӑрать.
Кулачӑ пӗтрӗ пулмалла,
Маттур ача асӑрханса
Утса каять, алне сулать,
Хӗрарӑмӗ ӑна тем каласа
Ҫурӑмӗнчен лӑпкать.

-4-

Ай, йывӑҫсе-ем, турачӗ-ҫулҫисе-ем,
Епле чӑтса тӑраҫҫӗ-ши вӗсе-ем?
Мӗн тӗрлӗ ҫил вӗҫсе-чупса ҫӳрет,
Кашних – муталаса тивсе илет.
Ма лӑпкӑ вӑхӑтсем сахал-ши,
Ма ҫилӗсем куштан, усал-ши?
Куҫа та курӑнмаҫҫӗ-ҫке,
Мӗнпур енчен хупӑрласа
Авсах, хуҫсах тӑраҫҫӗ-ҫке...

"Ҫилли усал ҫынпа
Ҫилли иртсе каймасӑр
Ан калаҫ, усси пулмаҫ",
"Ҫынна ҫилленнипе
Ан тӑвӑлса ҫӳре,
Хӑв сывлӑхна шелле" -
Ватӑ ҫынсен каларӑшсем асра.
Этем ӑшчикӗ те
Пин тӗрлӗ сӑлтавпа,

Хăшпĕр чухне сăлтавсăрах
Çил-тăвăл кăларать,
Терт кăтартать,
Çын ăшĕнче
Çил çĕклекен хăват сывлать.

Ав, пĕлĕтсем йăралана пуçларĕç,
Ăçта тапранчĕç-ши?
Çулне пĕлсех – чупаççĕ-ши,
Шăваççĕ-ши, юхаççĕ-ши, кусаççĕ-ши?
Кам хăвалать, хăйсем васкаççĕ-ши?..

-5-

Кур-ха тата, пĕр мăштăркка,
Кулюккана тытас шутпа
Хыçран хăваласа чупать,
Тытайманнишĕн тарăхса
Урипеле те тапкалать.
Тăпра-и, чул-и илчĕ те! –
Пере парать, хăлаçланать.
Кайăкĕсем вĕçсе каймаççĕ,
Вылянăн – вĕçкелиш тăваççĕ.
Хĕрарăмăн лăплантарасчĕ ачине,
Каккуй? – пĕрле тапăлтатать.
Амăшĕ мар пуль, нянька пуль,
Апат çитерчĕ пулĕ те
Уç сывлăша кăларчĕ пуль...

-6-

Пĕррехинче, ĕçе çитме
Автобус килессе кĕтетĕп,

Хам çĕрĕпе те куç хупман,
Минтер çине пуçа хуман,
Тем çыркалиш тукаласа
Ларса ирттернĕ те, ирпе,
Тăртаннă куç-пуçа чарса
Тăратăп остановкăра.

Чылай чухне, паллакансем,
Ыт-ахальтен сăмах хушни,
Уни-куни ыйту пани
Пулать-ха, хăнăхнă, юрать,
Умра пĕр кинеми тăрать,
Куçне хĕссе куçран пăхать:
"Хĕрĕм, тем пулнă пуль сана,
Хуйăх утланнăн, сулăнса
Утса эс тухрăн, куртăм-ха,
Мĕскершĕн, темĕн пулчĕ-им?"

Çи-пуçĕ чиперех, таса,
Уçас-и вăрттăн шухăша?
– Çула тухмалла мар пулсан,
Пуçланă ĕçĕме вĕçлеттĕм,
Вара, сиккипелех çӳреттĕм.
Ĕçре те – ĕçĕ мăй таран,
Унта та тинкерен тухан,
Вăхăт çитсе пыманнипе
Аптăрасах çитетĕп-çке...
Паян та, чĕптĕм çывăрман.
–Аха пуль, сăнарах пăхсан,
Мухмăрларах та курăнан.
Мухмăрла мар-ха, шăш килмеç,
Çын тем те калĕ, çын пĕлмеç,

Кун пек тухса та ан çӳре,
Эс телевизорпа – хитре-е...

Итле-ха, пĕр сăмах калап,
"Мĕнле пурнан?" – тесе ыйтсан,
Япăх тесе, начар тесе
Пĕр никама та ан шарла.
Япăх тесен – япăх çыпçать,
Эс "ничего" тесе кала.
Лайăх тесессĕн – кĕвĕçеççĕ,
Сăмах туса куç ӳкереççĕ.
Леш, "Мĕн çитмеç-ши пирĕн
Пурнăçра" тесе юрлатăн-çке,
Ялан юрла. Халăх итлетĕр,
Хумханса юрлатăр, хăйне
Мĕн çитменни çинчен шутлатăр.
Хальхи çынна пĕлетни,
Мĕн çитмеç? – чарак лартма,
Чăтма, тӳсме пĕлмеççĕ,
Хăрăнса кайрĕç, выçăхланчĕç,
Намăс çухатрĕç, пăсăкланчĕç.
Эп ватăлтăм-ха, шел мăнуксене,
Мĕскер кăтартĕ вĕсене
Асар-писер саманапа
Тăнĕ пулханчăк çут тĕнче?..
Юрĕ, калаçрăмăр пулать,
Авă, автобус хăпарать,
Яла çитсен, ял халăхне
Асаматран салам калап" –
Йăл-л! кулса ячĕ, куллине,
Тӳрех хупларĕ аллипе.

"Кала, пысăк салам кала,
Хăвна та пысăк тав сана" –
Ăçти ялтан, хăш районтан
Ыйтса пулмарĕ, ларса кайрĕ.

-7-

Ула кушак, хурăн айне
Пытаннă та, пăхса ларать,
Пĕр кукленет, пĕр çĕкленет,
Мăйне тăсать, пуçне пăрать,
Кама çĕтернĕ-ши? – шырать.
Ак, шуса кайрĕ майĕпен,
Чарăнса тăчĕ, тем шăшларĕ,
Курăк татса çиме пуçларĕ...

Ача чухне эп, Красноярск
Тăрăхĕнче пулса курсаччĕ.
Анне илсе кайса ярсаччĕ
Ширà – мăн кÿлĕ çумĕнчи
Сывлăх сиплемелли çĕре.
Çав санатори çурчĕсем,
Çÿллĕ, ик хутлă керменсем
Капмарĕпе тĕлĕнтеретчĕç.

Имĕш, авал çак вырăнта
Питĕ пуян çемье тĕпленнĕ,
Сăрт-ту та çеçенхир илемĕ
Кам кăмăлне-ши килентермĕ?
Чаплă тавра çĕр-мул хуçи
Ухутана тухса çÿренĕ,

Кайăк, чĕрчун тавраш тытма
Хаклă ăратлă йыт ӳстернĕ.

Пĕрре, юратнă йыттине
Тискер чĕрчун çурса тăкать,
Йывăр аманнă юлташне
Хуçи персе пăрахаймасть,
Çăлма май çуккине курса,
Кӳль хĕрринчи вăрман хĕрне
Хурать те, хурлăн уйрăлать.
Пĕр тапхăр сунара каймаç,
Юн юхтаран йыт йынăшни,
Куçран пăхса куççуль тăкни
Куç умĕнчен, асран каймаç,
Ик эрнерен, тек чăтаймаç,
Тухса утать, çитсе тăрать,
Ăçта? – вилли, шăм-шакĕ çук.
"Кашкăр тулларĕ пулĕ те
Ту хысакне пăрахрĕ пуль,
Каçар мана, каçар мана" –
Пуçне енчен-енне сулса,
Йыттин ятне кала-кала
Макăрса ларнă вăхăтра
Хăм!-латнă сасă илтĕнет,
Сиксе тăрать, ун умĕнче
Чĕрĕ йытти тăра парать.
Ак, тупăнать тĕлĕнмелли,
Тĕлĕнмелли-савăнмалли,
Сиплĕ иккен – Шира̀ кӳлли.

Çавăнтанпа Шира̀ шывне
Çынсем ĕçме пуçланă тет,

Тата, çак кӳлĕ леш енче
Хуп-хура тĕслĕ имлĕ-симлĕ
Ăш пыльчăк сийĕ тупнă тет.
Вара, çавна шута илсе
Чир-чĕрсенчен сывалмалли
Курорт-больница уçнă тет.

Шывĕ тăварлă-йӳçĕрехчĕ,
Сывалмаллаччĕ, ĕçмеллеччĕ.
Пыльчăкĕпе сĕрсе яратчĕç,
Сиккеленми выртма хушатчĕç.
Çеçенхирте чечек нумайччĕ,
Ăна жаркѝ тесе чĕнетчĕç,
Мăкăнь пекрехчĕ, татма шелччĕ.

Жаркѝ пекрех черчен чечек
Кавказ тăвĕсенче ӳсет,
Çав териех ачаш, тӳрех,
Татнă-татман шанать, ӳкет.
Хĕсĕк сукмаксемпе утса,
Эп, Лермонтов, Пятигорскра
Таптанă чулсене таптанă,
Эльбрус, Бештауна сăнанă.
Çамки тавра канма капланнă
Пĕлĕтсемпе салам ăсатнă
Чăваш енне, Шупашкара,
Атте-анне килне, яла.

Нихçан манми, эп астăватăп,
Германире, пĕр крепоçра,
Çĕр метр тарăнăшĕнчен
Ăсса кăларнă çăл шывне

Тутаннăччĕ, унтан вара,
Çăл пуринчи тĕттĕмлĕхе
Тинкертĕм те: "Тавах сана,
Çĕрваррипе çӳренĕ чух
"Кантăр кӳлли" тымарĕпе
Тĕл пултăн-тăк, салам кала" –
Тесеччĕ, шăппăн йăлăнса.

"Кантăр кӳлли" – Ăнтавăшри
Хастарлă тусăмçăм-çăлкуçăм.
Ун шывĕпе çăвăннипен,
Сыпкăмласа ĕçнипелен,
Пуçа тайса юратнипен
Чипер пулинччĕ ĕçĕм-пуçăм,
Çăл куçĕн, йăлкăшинччĕ куçăм.

-8-

Ах, çăнăх-юр та пĕрчĕ-юр çăвать,
Тăван тавралăхăм çарапакка тăрать,
Шăнать. Шăнмасть те пулĕ,
Темĕн те пулать, шартлама сивĕ
Йывăçа шартлаттарать, хăртать.
Çулçă сарман хура турат
Çуркуннепе курăнкалать,
Хурлантарать.

-9-

Больницăра выртатăп-çке ара,
Сас тытăнчĕ, сасса сиплетĕп.
Кантăк умне пырса тăратăп-и,

Выртатăп-и, пулни-иртнисене
Аса илетĕп.

Ман кĕркуннем те çитрĕ-шим вара,
Тен, сассăм тытăнни кулянтарать,
Мĕн-ма-ши ĕмĕр ĕрĕхсех чупать?..
Ӳт-пĕвĕм кушăхать-çав, кушăхать,
Сăн-питĕме темскер килсе сăхать,
Тен, шухăш, тен, тĕсне çухатнă ĕмĕт?
Кам айăпне пула вăл тĕссĕрленнĕ,
Ма? – шанчăксăр пулăмсене ĕненнĕ.

Çапла пулас, ман кĕркунне пахчи
Калинккине уçса кĕме чĕнет пулас.
Ай, ĕлкĕретĕп халĕ, васкамас,
А мĕншĕнех, мĕне кĕтсе тăхтас?
Пурăнăçа, çут тĕнчене савса
Çĕн сăвă-юрă кĕвĕлес, хайлас,
Çĕнелнĕ сассăмпа яри-и! юрлас...

-10-

Пĕр уйăх лартăм кантăкран пăхса,
Çумăр çаптарчĕ, юр та, пăр та çурĕ.
Саралнă çулçă лĕпĕшĕн вĕçни,
Сивĕ кӳлленчĕке ӳксе ишни...

Пĕр уйăх хушшинче
Илемлĕ кĕркунне илемĕ лӳчĕркенчĕ,
Çавна сăнарăм та, хама та –
Лӳчĕркеннĕн туйса кайрăм.
Чĕрем те, чунăм та хавшарĕç,
Ĕнтĕркерĕç-ши?..

Сăлтавĕ пысăк – сас тухмасть,
Юрлама çеç-и? – халлĕхе ман
Калаçма та юрамасть.

Пĕр кайăк ирсерен
Ман кантăк умĕнче юрлать.
“Ман сассăм таврăнать-и?” – тетĕп те,
“Тĕвик, тĕв-тĕвĕл” – тет те çичĕ хут,
Вĕçсе каять.
Çак ырă кайăк – хĕл каçма юлнисенчен.
Паян – ман хурлăхлă шанчăкăма
Хăв çунатту çинче ярăнтарнишĕн,
Хăв сассупа – ман сассăма
Пĕрле вĕçме чĕннишĕн тав сана.
Сивĕ кунсем килсен, раштав çитсен
Эс вĕçсе пыр, шакка кантăкăмран,
Тутлă хăналăп – аллăмран.

Чăтас пулать, чăтатăп-ха, чăтатăп,
Чăтăм тупса – чире çĕнме
Пулăшакан тухтăрсене
Хисеп тăватăп, тав тăватăп,
Ячĕсене асрах тытатăп:
Г.П. Егорова – невропатолог,
Р.Е. Ибрагимов – травматолог,
М.П. Ашмарин – отолоринголог.

Упрас пулать чи хаклă пурлăха –
Сывă пулма пилленĕ сывлăха.

-11-

“Светлана, эс телейлĕ-и?” –
Тесе ыйтсан,
Пĕр вăхăт шухăшлатăп...

Ҫӑнах, телейлӗ пуль,
Телейсӗр эп
Темешкӗн ҫылӑх пуль.
Пӗр хумханса та савӑнса
Сцена ҫине тухса тӑрса
Хӑватлӑ сӑвӑ каласан,
Хӑватлӑ юрӑ юрласан –
Халӑх хаваслӑн ал ҫупни,
Хапӑл туса хӑна туни –
Ӳсӗм тума – хевте ҫитни,
Телей курма – мехел ҫитни.

Тавах Турра,
Тавах ҫут тӗнчене,
Тавах сире чунтан-вартан:
Ӑшпиллӗ аттепе анне,
Сӑпайлӑ мӑшӑрӑм, юратнӑ хӗрӗмсем,
Мӑнукӑм, тӑвансем, юлташӑмсем,
Йывӑрлӑхра – чӑтӑмлисем,
Савӑнӑҫра – ытарлисем,
Ӗмӗр тӑршшин тӗрекӗсем.

Тавах сире, ҫӗре ҫити,
Вӑй паракан: вӑрманӑмсем,
Улӑхӑмсем, ҫӑлкуҫӑмсем,
Юхан шывсем, уй-хирӗмсем,
Хӗвелӗм, Уйӑх, ҫӑлтӑрсем...

*13.09-27.10.02.*

## ХӐРАВҪӐ

-1-

Карма ҫӑвар чӗлхи –
Хура ҫӗлен,
Наркӑмӑшне – ҫӑхма пухать.
Ёҫне тӑвать те, пӗр кана
Шӑпах пулать, хуллен шӑвать,
Пуҫ каҫӑртса илме
Вӑйне пухать.

-2-

Ҫерҫи ик урипе тапа-тапа
Сикет, вӗҫкелесе илет.

Ҫерҫи те кайӑк,
Темшӗн-ҫав ӑна ни сассине,
Ни ҫунатне паман.

-3-

Тем тиет, мӗн тиет? –
Ҫӗклеместӗп,
Те кулать, те макрать –
Итлеместӗп.

Янӑравӗ – хӑйне питлеме,
Ахӑравӗ – хӑйне шеллеме.

Хутшăну – тавлашу,
Тем сутса илесле харкашу.

-4-

Сĕтел çапса шарт! сиктерес
Шутпа калаçакан:
Чышки – чукмар,
Сĕтел – тăшман лĕпки тет-ши?

-5-

Хăйне хăй чутласа,
Хăйне хăй якалса,
Меллĕ вырăн тупса
Шăтарса чавăнса
Кĕрсе ларнă Юпа –
Таврана
Хăй çине пăхтарасшăн,
Хăйне хăй
Тĕнчене кăтартасшăн...

-6-

Ёнер – юлташ тени
Паян тăшманăн тапăнсан,
Тинех куратăн унăн
Чăн! – тӳнтер сăнне-питне.

Хирĕç тăмасăр каçарас пулать.
Калаçтăр та калаçтăр – маçтăр...

-7-

Хăравçă – шăртлă.
Шăрчĕпеле тиве-тиве
Пурне те хăратса çӳрет.
Ан тĕкĕнччĕр!

Хăравçă – шавлă.
Çуйхавĕ хăйĕнчен малта
Тĕпĕртетме пĕлет.
Шăпланччĕр те тăнлаччĕр!

Ăна хирĕçлемеççĕ,
Кĕлт! те тĕкĕнмеççĕ.
Хăраççĕ?!. Тен,
Таса юлас тесе
Вараланас темеççĕ.

Хăравçă вăл – хăйне
Хăратасран шикленнипе
Ялан – хурах тусах тăрать,
Куштанланать

*30.12.02.*

# РАШТАВ СĂВВИСЕМ

-1-

Пĕр асли - çамрăка
Ырă чунлă пулма
Вĕрентме юрататъ.

Хăй – кама та пулин
Ыр туса курнă-ши?

-2-

Каланă сăмаха ĕçпе –
Пĕрре, тепре тĕвлеймесен,
Суиçĕн юмахне
Шута илми пулаççĕ.

-3-

Пĕтĕмпех:
Тымартан – тымара.

-4-

Çăмарта хуппийĕн – икĕ сий,
Çăмарта саррипеле шуррин –
Ашшĕпе амăш евĕр, сыхăра.

Сарă чĕпсем –
Çунатланма пуçланăçем
Тĕкне чăпарлатас йĕрке ăçтан-ши?

-5-

Çӳл тӳпери “Хуркайăк çулĕ” ятлă,
Шутне пĕлме май çук
Планета-çăлтăрсен ушкăнĕнче
Эпир те, Çĕр-планета ачисем
Тĕнче Уçлăхĕнче вĕçетпĕр.

Унта – “Кайри-мала”
Çӳрес йăла вырăнлă мар,
Пур çăлтăрăн та – хăйĕн:
Тĕплĕ вырăнĕ, çути-хăвачĕ.

-6-

Çĕр те, çуратнă анне пек,
Хăй ачисен ĕçне-хĕлне
Пĕлсе-курса тăрать.
Савăнăçне те, хурлăхне те
Йышăнать, чăтать.
Йăнăш туса сусăрлансан
Тӳрлентересшĕн тăрмашать.

Анне сăмахĕ вăл – симпыл-эмел.
Çĕр-çутçанталăк сĕткенне
Техĕмлетсе тăраканни –
Тӳпе-Атте-Хĕвел.

-7-

Этем хăйне мĕн кирлине
Камран ыйтса илет?

Чи малтанах, амăшĕнчен –
Кăкăр сĕтне,
Сухаçă-ашшĕнчен –
Хура е шурă çăкăрне.

Çунатлансан, мăшăрлансан,
Çуратнă пепкине
Йĕркеллĕ ӳстерме,
Тăван йăхне тăсмалăх
Ăнăçуллă ĕçлеме,
Ыйтать вăл ырлăх-сывлăх
Турăран – чунтан.

-8-

Турă-Атте, юрать эс пур –
Илтетĕн, ăнланатăн, пулăшатăн,
Çылăхсене те каçаратăн,
Йывăрлăха чăтма-тӳсме,
Таса пулма хăват паратăн.

Çӳл тӳпери Аслă Килте те,
Хăнана килнĕ Çĕр çинче те,
Эпир – Турă-Атте куç умĕнче,
Ун Куç çутин ытамĕнче.

-9-

Телей курас килет,
Телей ăçта çӳрет?
Аякра мар вăл, таçта мар,
Хамăр çумрах, хамăр ăшрах.

Ăна çулăхакан,
Кĕпĕрленсе хупăрлакан
Киревсĕр туйăмсем те
Çавăнтах.

Выçăх ăмсануран,
Йĕплĕ кĕвĕçӳрен,
Шĕвĕр тарăхуран
Тасат та хăв ăшна –
Телей куран.

-10-

Мĕн вăл канăç?
Канăç вăл – тасалăх.

Таса шыва пăтратнă пек,
Таса чуна пăтратакан
Сăлтав нумай.

Тĕнче çурри – хури, таса марри,
Тĕнче çурри – шурри, таси, ырри.
Чипер пурнас тесен, – асăрхануллӑ,
Тимлĕ пулмалла кăна-ши?..

-11-

Тăрлавсăр лавçă урапи айне
Пулассинчен хăтăласси –
Ăна, çул парасси.

Çулĕ вара – лавне те,
Лавçине те, ĕрĕхтерсе
Кăпăклантарнă лашине те,
Çитес çĕре çитсен
Тăп! тăрататть.

-12-

Сĕрме – пĕлес пулать:
Пĕр ĕç тумашкăн
Пĕр чĕлхе тупма,
Ăшаласа çимешкĕн
Пул тытма,
Çăкăр чĕлне пылпа,
Çупа сĕрсе апатланма,
Пӳрне пусса хĕлĕхлĕ
Сĕрмекупăс калама...

Сĕрме пĕлни
Чеелĕх е ăсталăх?

-13-

Виçĕпиннĕмĕш ĕмĕрĕн
Виççĕмĕш чаплă Раштавĕ.

Сурăхпа качака çулĕнче,
Сурăхпа качака витинче
Çын пулса çуралса,
Сурăхпа качака майлăрах
Этемсем хушшинче пурăнса:
Сурăхсем-мĕскĕнсем,

Çăварне шыв сыпса,
Качака-куштансем
Çухăрса – витлеме, питлеме,
Хĕнеме, вĕлерме
Хăйнă хăй халăхне
Турă Ывăлĕ чăтнă,
Сăмахпа ылханман.
Чунĕ тулхăрнă пулĕ...

Ахальтен-им асап йăтăнать,
Вĕчĕх çылăх асать.

Витери тислĕке тасатса пĕтереймĕн,
Çылăхран та, тарса хăтăлма,
Çăлăнма çăмăл мар.

Ах, анчах,
Тислĕк панă тăпра
Кăпăшка, пархатарлă.
Пурнăçри куçкĕрет
Пулăмсем, ăнлавсем те –
Пăтравлă.

*07.01.03.*

# ТЁКЁР

-1-

Куçу хёлхемĕ
Чĕлтĕр-чĕлтĕр,
Сăмах вылявĕ
Вĕлтĕр-вĕлтĕр.
Куçран пăхатăн,
Куçăм – тĕкĕр.

Ун витĕр – чунăма
Кĕрес килет-и?

-2-

Аслати халтăртатать –
Хăратăп, сăх-сăхатăп.
Хăлтăр-халтăр этемрен
Кулатăп, ютшăнатăп.

-3-

Эпĕ – юрă хыватăп,
Ĕçлесе ĕшенсен –
Вăй пухма
Çăкăр, кукăль чăмлатăп.

Эсĕ – тырă акатăн,
Ĕçлесе пĕтерсен,
Кĕреке пуçтарса
Юр юрлатăн.

Эпĕ – сана, эсĕ – мана
Тав тăватпăр.

-4-

“Кунĕпеле çум çумларăм,
Пахча çырма тухмалла,
Лаша тытса килмелле,
Вăхăтра ĕлкĕрмелле” –
Пĕчĕк чухне, асанне
Аттене каланине
Аса илтĕм те... шутлатăп.

Çырнă сăмах – вăрлăх пуль,
Пÿлме тулли тырри-пулли –
Кĕнекийĕ – пурлăх пуль.

Пурнас килет пулмалла,
Çул хыватпăр малалла.
Инçе çула – кутамккана –
Кăмакара кăпăшланнă
Çавра çăкăр чикетпĕр,
Хырăм выççан, çиетпĕр.

Тĕрлĕ шухăш еккипеле
Ĕнĕрлесе утнă майăн
Ăша хывнă юррăмăрсен
Сăвви-кĕвви сулмаклă.
Кунçул утти – амаклă.
Хывнă юрă – вăрăм çула
Кĕскетекен сукмак пуль.

“Тайлăк-тайлăк çул тайлăк,
Çул тайлăк мар, хам тайлăк” –

Тенисем те пулкалать.
Кӗвӗ-юрӑ, сӑмах-юмах
Вӗçме, юхма юрататать,
Юптарма та пултарать.

-5-

"Палан, ӑшӑ ансан кӑна
Çеçке çурать,
Çӗре – пиçсе çитсен кӑна
Чавма, сухалама,
Калча лартма,
Вӑрлӑх акма юрать.

Турат та, çулçине
Чи вӗçӗнчен, чи çамрӑк
Папкинчен уçать.
Ёçне – вӗçне çитересех тесен
Пӗр вӗçӗнчен пуçӑнмалла,
Вара – ӑнать." –
Çапла эп, асаннем вӗрентнине
Асра тытса
Садра чакаланатӑп.

*09.01.03.*

## ЧУНА УҪСА...

-1-

Тавраллипе
Сăмах-юмах ҫӳрет,
Чăн ҫумĕнче суя лĕпĕстетет.
Чăнне суйла-суйла
Суиҫҫине аяккалла сирсе яма
Мĕн чухлĕ вăй пĕтет?
Темпек ҫине тăрсан та, хăш чухне
Тĕрĕссине тĕрĕс марри ҫĕнет.

-2-

Ай, савнă тусăм,
Пирĕн хушăра
Мĕскер ҫетĕлтетет?
Ай, савнă тусăм,
Пирĕн хушăра
Усал – шăлне йĕрет.
Эпир ҫывăхланса
Тату тупассинчен,
Пире ҫурăмсенчен
Ик еннелле тĕртет.

-3-

Кичемлĕх пусрĕ, пуслăх пек
Чĕрем ҫинче выртать.
Кам та пулин килинччĕ те
Илсе перинччĕ...

Çук çав, илтмеççĕ,
Пулăшас темеççĕ.

Ах, хамăнах хама пулăшмалла,
Йывăр шухăшсенчен
Хăтăлмалла, çăлăнмалла.

Чуна уçса
Çăлкуçăн шарласа юхма
Çумра кам та пулин пулинччĕ...
Кам та пулин-и?
Эсĕ кирлĕччĕ, эс – çĕтрĕн.
Сивĕ тăман-тăшман
Сана хăй ăшĕнче путарчĕ,
Ман патăма çӳренĕ сукмакна
Пытарчĕ, пăтраштарчĕ...

-4-

Килеттĕн те –
Юрлас килетчĕ,
Пĕр мăшăрăн çунатланса
Вĕçес килетчĕ.

Юрлаттăмăр, вĕçеттĕмĕр,
Пĕрле чухне, тĕнче
Епле илемлине кураттăмăр,
Пĕр пайăрка пулса йăлтăртататтăмăр.

Тĕнче илемĕсем сӳнмен, сӳнмеççĕ те,
Анчах, пĕччен чухне вĕсем мана
Шеллеççĕ, пытанма пĕлеççĕ.

Пĕрле чухне эпир
Илем хĕлхемĕччĕ...

-5-

Тивĕртсе ятăн, лайăх,
Килĕшет, çунатăп.

Сӳнтерессӳ килет-и?
Ан тивсем, эпĕ хамах
Çунса пĕтсе шăпланăп.
Эс лăпкă пул,
Сана нимпе те чăрмантармăп.
Çути те, тĕтĕмĕ те –
Канăç тупасса шанса
Тӳпенеллеваскать...

-6-

Çыру çыраттăн,
Вĕçтерсе яраттăн, саркайăкăн –
Телей çинчен юрлаттăн.

Сан çырăвна вулас текен
Нумайччĕ.
Асăрханмарăн-ши, хĕрсе кайса
Кам ячĕпе юрланине те
Мантăн-ши?

Пĕр чăмăркка телей
Чăл-пар! саланчĕ,
Ванчăккине – пĕри,
Тепри пуçтарчĕ.

Шел мар-и? Ваннă,
Сапаланнă пурлăхна
Унта-кунта тупайăн-и?..

-7-

Ан айăпла,
Мана кăна ан айăпла.
Иксĕмĕре икке çурма,
Виççĕмĕшне ху чĕнтĕн мар-и?
Манпа кичем тулларĕ-ши сана,
Урăхлатасшăн пултăн пурнăçна.

Унпа – ихĕлтетсе те ывăнтăн пулас.
Ан тархасла, шанмас, йышăнаймас,
Текех сана чунпа та,
Чунсăр та савма пултараймас.

-8-

Ай, тусăм-мăшăрăм,
Сан умăнта чĕрçи çине тăрса,
Урусене ытамласа,
Чунтан-вартан эп
Каçару ыйтатăп:
Пули-пулми сăлтавсăрах
Кӳрентернишĕн,
Пур-çук сăмах тăкса
Тарăхтарнишĕн,
Йăнăш тукаласа хурлантарнишĕн –
Ӳкĕнетĕп,
Айван пулнишĕн именетĕп.

Каçарăн-ши?
Каçармасан та – çутă тĕнчери

Чи çывăх, хаклă çыннăмран
Ытарлăн каçару ыйтма
Вăй-халăм тупăннишĕн –
Тав, чунăма.

-9-

Юрать,
Урăххине юрат.
Ăна эс пурпĕрех
Мана юратнă чухлĕ
Йăпанса саваймăн.
Çурри ытла эс –
Манăн ăшăмра.

Урăххипе – телейлĕрех пулма,
Сана – хăвна тавăрса парăттăм –
Тăпăлтарса кăлараймастăп-çке...

-10-

Çĕрулмипе какай,
Купăстапа çăмартаран
Ик кукăль лартрăм.
Кăмакине уçа-уçа пăхатăп,
Çунса каяссинчен
Тĕрĕслесех тăратăп.

Ăшра та икĕ туйăм вăй вылять:
Пĕри вăл – шанăç,
Иккĕмĕш – иккĕленӳ.

Ман вӗсене те пӑхмалла,
Чипер, таса пурӑнмалла.

-11-

Ахӑр-авал, аҫаҫынсем
Тӑм лапашка чӗрсе
Ҫырса-ӳкерсе ларнӑ вӑхӑтра,
Амаҫынсем тир тумтирне
Тӗрлесе ларнӑ.

Кашни – хӑй шухӑшне ҫавӑрттарса,
Хӑй юррине ӗнӗрлесе
Илемлӗ сӑвӑ-юрӑ-тӗрӗ
Ҫаврӑмланӑ...

-12-

Чӗнетӗн,
Тӗл пулас килет-и?
Манӑн сана курас килмест,
Хальччен мӗн тӳснине те
Асӑнас килмест.

Татах вылясшӑн-и,
Татах куласшӑн-и манран?
Санпа пӗрле хамран кула-кула
Чыхӑнса лартӑм...
Паянтан мар,
Эпӗ, ӗнертенпех – мӑран.
Никам патне те, тек ниҫта та
Туртӑнмастӑп, – ҫитет, ӑнлантӑм мар-и? –
Ирӗклӗ пулма сӗре аван.

-13-

Эп айван-и, эсӗ-и,
Иксӗмӗр те мар-и?
Пӗрлӗх ишӗлчӗ пулсан
Уйрӑлса пӑхар-и?

Вӗçертместӗн аллунтан,
Çумӑнтах тытатӑн,
Эпӗ, тепринпе телей
Курасран хӑратӑн?

Кун та, каç та таврӑнать,
Ӗмӗр – таврӑнаймӗ,
Ӑптӑр-каптӑр сӑмахран
Тасалса пулмарӗ.

Эс айван-и, эпӗ-и,
Çитӗ, лӑпланар-и,
Пӗр-пӗрне тӗрек пама
Килӗшӳ тупар-и?

Тӳнсе кайнӑ пӗрлӗхе
Тӑратса лартасчӗ,
Ик енчен çупӑрласа
Каçару ыйтасчӗ.

Пӗрлӗх туйӑмӗ пире
Тачӑ çыхӑнтарӗ,
Уйрӑлас шухӑшсене
Таптарса кустарӗ.

*26.01.03.*

## ЧУН АПАЧĔ

-1-

Эп чун апачĕ пĕçеретĕп те,
Вулакана сĕнетĕп.
Тутаннă май: "Паха, хăватлă",
"Пиçсе çитмен", "Эмел",
Е "Шĕвĕрех" – тесе
Хак паракан нумай.

Ман: "И-и, ара" – текелесе
Татах та пĕçерес хăват,
Самант! – чуста пек хăпарать.

-2-

Алкум умне пырса тăрса
Пĕр вăтăр-хĕрĕх алăкран
Хăра-хăра, чĕтре-чĕтре шаккать.
Чаплă кермен пăлтăрĕнче
Улпут йышăнасса шанса
Кĕтсе ларать.

"Ыйтсан-ыйтсан – параççĕех,
Ăнланакан тупăнатех,
Ăнланакан пулăшатех" –
Чуна пăралакан шутпа
Пĕрин панчен теприн патне
Ун утмалла та утмалла,
Ĕç тумалла.
Ыйткалакан-çыравçăн
Кĕнеке кăлармалла.

Ыйткалакан тесе
Кӳрентерес килмест.
Вăл кĕнеке-кермен лартасшăн,

Вăйпиттисем пулăшнипе
Ниме тăвасшăн.

-3-

– Мĕнле пурнатăн?
– Апат тăрăх.
– Аван-и-ха?
– Вутне хуратăп, лартса яратăп,
Вĕрсе тăратăп, антаратăп,
Хырăм тăраниччен сыпатăп.

– Хырăм нумай ыйтать-çав-у.
– Ыйтсан – парас, хамăн вĕт-у.

-4-

Куçне хĕссе куç айĕн
Пăхкалиш тăвать,
Тута пĕрсе
Куллипеле сăхать.
Чăкăлташса кайма
Сăлтав тупасшăн,
Чукмар-сăмахĕпе
Çапса хуçасшăн.

Пĕлекенсем:
“Ун ăшĕ пăсăк” –
Теççĕ ун çинчен,
Нивушлĕ халь те
Хăлхине кĕмен?

Шăршланасси – часах,
Тасаласси – вăрах.
Лăплан, пуçтах.

*27.01.03.*

# ÇУНМА – АНСАТ, СӲНМЕ – АСАП

-1-

Кĕрен çилхеллĕ
Вăштăрти çилсем,
Ăçтан вĕретĕр?
Хĕлле, çуркуннене
Аса илтертĕр.

Сан сывлăшу-и,
Сан туту, аллу-и?
А-ай, вĕри...
Ай, кирлĕ мар,
Тек ӳсĕрлес килмест,
Урăлса çитрĕм çеç,
Аран-аран...
Ай, кирлĕ мар, татах,
Татах ӳкес-им ураран?...

-2-

"Çитес кунах
Тепре тĕл пулăпăр,
Юрать-и?" – терĕн.

Кунсем килеççĕ те каяççĕ,
Пăшăрхана-пăшăрхана,
Çитес куна çитесшĕн-ши? –
Васкаççĕ.

-3-

Тĕл пуличчен – тĕл пуласси,
Пĕр тĕл пулсан – уйрăласси.

Тен, туйăмсем çăмхаланса каяççĕ,
Пĕтĕрĕнсе тĕвĕленсе лараççĕ?..

Паянлăха – татас,
Ыран – сыпма сăлтав тупас.
Сăлтавĕ пысăк,
Татнă вырăн ыратать...

-4-

Тав сăмахĕ – пĕр ытам,
Çитерсем манран салам.
Чунăм, ирĕклĕн вĕçсе
Тĕкĕнсе-тивсе çӳре
Вăрманти йывăççене,
Улăхри чечексене,
Айлăмри çăлкуççене...

Ытамна салат, пуçтар,
Юратуллăн йышăнар
Йывăççен те чечексен,
Çăлкуççен юррисене.

Эп вĕренĕп кĕввине,
Эп вĕренĕп сăввине,
Эп вĕренĕп ташшине –
Юрласа савăнтармашкăн,
Ташласа савăнтармашкăн
Çутçанталăк-Тĕнчене.

-5-

Пурте – пурăнатпăр,
Пурте – килнĕ-кайнă

Чĕрĕ пулăмсем.
Пурте, çут тĕнчере
Паян – камсем,
Ыран – мĕнсем,
Вилĕмсĕр Пурнăç
Тĕшшисем, хунавĕсем.

-6-

Тарас та пытанас,
Ăçта?
Таçта та – çын,
Таçта та – çĕр,
Таçта та – шыв,
Таçта та – çил,
Теме те сăнаса,
Курса тăран Тӳпе.

Ăçта тарас, епле?..

-7-

Пурнăç аван чухне
Эп хама хам – тăван,
Пурнăç начар чухне
Эп хама хам – тăшман.

Ĕçчен пулни лайăхлатать,
Юлхав пулни начарлатать
Васкавлă кун-çула.
Кун – ĕçлеме, каçĕ – канма,
Пурнăç йĕрки –
Йĕркеллĕ пурăнма.

-8-

Пĕр нимĕн те,
Хăть пысăкки,
Хăть пĕчĕкки –
Ытлашши мар
Çак тĕнчере.

Пурне те! –
Мĕн те пулин,
Кам та пулин валли
Яваплăн ăсталанă
Тĕп Этем Алли.

-9-

Мана саваканни, е савманни-и? –
Эс ĕмĕр ман çумра.
Эпĕ те, эсĕ те –
Этем пĕлсе пĕтерейми
Кăткăс, ытарайми –
Кĕтрет-Тупра.
Çынна тăрантарса
Пурăнакан – пулас тăпра...

-10-

Çул хыççăн çул,
Е ĕмĕр хыççăн ĕмĕр,
Черетре тăрать?
Ай, ĕмĕр хыççăн ĕмĕр уçăлни –

Вăхăт-Хуçа Этемлĕхе
Туртса-тĕртсе пыни...

Перет те – антарать,
Тĕртет те – хăпартать,
Çĕрпе Тӳпе çын чунĕпе
Тен, мечĕкле вылять?..

-11-

Çӳлтен, сӳнми
Кăвайт хĕлхемĕ анчĕ,
Туйăм килчĕ.
Хăй мăшăрне
Шырамалла пулать...

Тупать е тупаймасть? –
Асапланать:
Пĕринпеле – хĕрсе каять,
Тепĕринпе – шупкаланать.

Тупаймасан та, лап! –
Сӳнсе ларма пултараймасть.
Хăть вĕлкĕштĕр, хăть тĕлкĕштĕр –
Ун ăшă кăларса
Йăлтăртатас пулать.

Çунма – ансат, сӳнме – асап.

-12-

Кăвакарнă çăкăр –
Вăхăтра çимен,

Кăвакарнă туйăм –
Вăхăтра илмен.

Сивĕннĕ савниçĕм
Куçăмран çухалчĕ,
Пурăнас кăмăлăма
Чутласа хăварчĕ.

Кăвакарнă çăкăра
Тасатса çиес-и,
Кăвакарнă çӳçĕмрен
Пăвăнса вилес-и?

Ай, кăвак Тӳпе тăрри,
Аялла пăхсамччĕ,
Çĕнĕ туйăм кĕввисем
Антарса парсамччĕ.

-13-

Туйăм ăçта вырнаçнă-ши,
Курса – туятпăр,
Е, туйса – куратпăр?..

-14-

Ача чухне,
Кӳршĕсемпе пулла каяттăмăр,
Чул айĕнче пытанакан çут пулă,
Хăмăр йăмпăлкка шампа
Алпах тытаттăмăр.
Ватă йăмра тымарĕ айĕнчи
Авăрсене те хыпашлаттăмăр.

Ик аллăма икĕ шапа лексен
Шари-и! – çухратчĕç тусăмсем.
Пулли: “Яр, шыва яр,
Эп шывсăр пурнаймастăп” –
Тесе каланăн, çăварне уçса хупатчĕ те
Алра сиккелесе илсе
Чăмпăлт! – шыва чăматчĕ.

Шывĕ пăтранчăк-и, е тăрă,
Пулăн шыврах пурăнмалла.
Сывлăш тусанлă-и, таса-и,
Çак сывлăшпах сывламалла
Çынсен те...

-15-

Сывă пурăнасчĕ, лăх! – тулли,
Сунатăп сывлăх.
Ырă килсех тăринччĕ лăх! – тулли,
Сунатăп ырлăх.

Мĕскер кирли пулинччĕ лăх! – тулли,
Çĕклентĕр пурлăх,
Ăшчик çути пулинччĕ лăх! – тулли,
Ёрчетĕр чунлăх.

*31.01.03.*

# ТУРӐ ПИЛӖ

*"Чӑваш пӗтсен тӗнче пӗтет"*
*Ваттисен сӑмахӗ*

-1-

Ак сире – сывлӑш,
Лӑш пулӑр та, сывлӑр.
Перекетлӗр ӑшри сывлӑша,
Перекетлӗр тулти сывлӑша.
Лӑш! пулма – мӗн кирли
Лӑх! тулли пулмалла,
Уншӑн – вӑй хумалла.

Ак сире çӗр – чуллӑ, кӑпӑш тӑпра.
Ак сире шыв – чи асамлӑ тупра.
Ку – сирӗн çӗршыв, юратуллӑн упра.

Шывӗ – ӗçме, çӑвӑнма, ӗç тума.
Çӗрӗ – вӑрлӑх акса хунаса пурӑнма,
Хунава ӗмӗртсе ӳстерсе пил пама.

-2-

Этем ывӑлӑм, хӗрӗм Йӑва,
Ар илемӗ – илемлӗ ама.
Йӑвапа йӑваланнӑ Этемӗн
Йӑвари чӗпписем те илемлӗ.

Ар-ама-çын – чӑваш,
Çӗре – аш, шыва – аш.
Ар-ама чӗлхине ан çӗтер,
Çӗр çинчи пурнӑçа ан пӗтер.

*01.05.03.*

# СЁРЕП

-1-

Атте-анне чӗлхи,
Атте-анне сӑмахӗ
Пулинччӗ – ытарми
Кӑмӑл ӑшшин ахахӗ.

Атте-анне чӗлхи,
Атте-анне сӑмахӗ
Пулинччӗ – йӑлтӑрти
Хӗвел шевлин ҫуначӗ,
Пулинччӗ – чи сӗтеклӗ,
Пехетлӗ чун апачӗ.

-2-

“Ах, апла тусассӑн лайӑхрах-ши,
Ах, капла тусассӑн аванрах-ши” –
Шухӑша каятпӑр, канашлатпӑр,
Тавҫӑрса ҫитсен, ӗҫне пуҫлатпӑр.

Маларах сӑмах тӑван та, ӗҫ ӑнмасть,
Маларах, юмах ҫапма, тен, юрамасть.

-3-

Вӗрентеҫҫӗ, пурте вӗрентеҫҫӗ,
Ачасем питех итлес темеҫҫӗ.
Йӑнӑшсем тӑваҫҫӗ, айкашаҫҫӗ,
Ҫамкине ватаҫҫӗ, хур кураҫҫӗ,
Хайсем тӗллӗн пурӑнма пӑхаҫҫӗ.

-4-

Ни чăвашла, ни вырăсла çырни –
Çукпа пĕрех.
“Эп – критик”, тет хăйне вăл –
Пурпĕрех.
Ярса парсассăн пĕр черкке эрех? –
Ĕçтерекенĕ, хăйне евĕр – гениех.

-5-

Çын хăлхипе тăнлакансем –
Хăлхасăр-ши?
Çын чĕлхипе çапакансем –
Чĕлхесĕр-ши?
Çын куçĕпе куракансем –
Чĕм суккăр-ши?..

-6-

Лутра мачча́ллă пӳлĕмре
Лутра хĕрарăм сиккелет.

Хăй маччине
Хăй вăйĕпех çĕклес шутпа
Вăл такама та чĕнсе илнĕ.
Ĕçкĕ тăваççĕ, ĕç тăваççĕ,
Тăрмашаççĕ...

-7-

Çавала юхса тухмашкăн
Вăй çитерĕ-ши çăлкуçăм?

Çавал çулĕ те асаплă,
Çаврăнать вăл кутăн-пуçăн.

Ман çăлкуçăн пĕр тумламĕ
Атăла юхса тухас-тăк,
Атăл шывĕпе пĕр танлăн
Тинĕсе кĕрсе каяс-тăк! –
Ай, çăлкуçăмăн сассийĕ
Ĕмĕрне те иксĕлминччĕ,
Уççăн, ирĕклĕн, сăпайлăн –
Ĕмĕрех шăнкăртатинччĕ.

-8-

Каçарăр, пур чухне те
Тимлĕ пулаймарăм пуль,
Кирлĕ чухне кирлĕ сăмах та
Хушаймарăм пуль,
Мăнкăмăллăхăра тивĕçтерме
Вĕренеймерĕм пуль...

Каçарăр, ман та, сирĕнни пекех
Чĕрем те, чунăм пур.
Вĕсен те, сирĕнни пекех
Вичкĕн сăмахĕ-тĕсĕ пур.
Вичкĕн куçпа тĕлленĕ
Вичкĕн сăнăпа сăхма
Тархасшăн, тăхтасамăр,
Ан тивĕрсемĕр,
Пулăрсамччĕ сапăр.

Çăхав яман, суя-элек сарман,
Усал туманччĕ, сӳрĕк те пулман.

Пĕлĕшĕмсем, ĕçтешĕмсем тесе,
Пĕрре-тепре çӳрерĕм-лартăм итлесе
Эсир мĕскер тавра калаçнине,
Кама ырланине-хурланине...

Мĕн килĕшмест сире, мĕскер çитмест,
Мĕн пуррипе ма çырлахас килмест?
Сахал-им чап, сахал-им-ха хисеп,
Сахал пулсан, çитмест пульнех сĕреп?

Юррăмсене ватас-таптас килет-и,
Сăввăмсене çурса тăкас килет-и?
Эп – сирĕнне тивместĕп, ăмсанмастăп,
Эп – сирĕнне тивместĕп, хапсăнмастăп.

Ман, сирĕнни пекех, пур хамăн шай,
Картне картлаканниййĕ – эпĕ мар,
Картне картлаканни – эсир те мар.

Хайлавăрсем пухутлă, хулăм, капăр,
Лăпкăн, чунтан калатăп, каçарсамăр,
Сăпайлă, çын эретлĕ çын пулсамăр.

*01.05.03.*

# САККУН

-1-

Хĕл те иртрĕ,
Çуркунне те çитрĕ.
Çу кунĕсем, кĕр кунĕсем –
Хăй вăхăтне пĕлсе, яваплăн,
Малта кĕтсе тăракансем.
Кайран каллех – хĕлле.
Çул хыççăн çул черетленет,
Хăй йĕркипе – ĕлĕкхилле.

Пурнăç, вăйне пухма –
Çамрăкланать,
Канса илмешкĕн – ватăлать.
Тĕнче – пĕлсе сывлать,
Пурне те – хăйĕн саккунне
Пăхăнтарать.

-2-

Ăсли, ватăлнăçем
Татах та ăсланать.
Ал-урине, пуçне ĕçлеттерсе
Пуян лавне тапаçлансах туртать.

Вĕшле-и, анчăк-и? –
Çул хĕррипе лĕпĕстетсе
Вĕркелешсе ланккать:
"Хам-хам, хам-хам,
Хам-хам, хам-хам..."

Ăслийĕ чарăнса тăмасть,
Пуçне те çавăрса пăхмасть.
Кансĕрлекес текен “Хам-хам”,
Уншăн – никам та мар такам.

-3-

Эп – амаçын,
Эс – ман арçынăм,
Санпа пылланчĕ
Чунăм, юнăм.

Ай, ыталарăн,
Ай, чуптурăн,
Мана – хĕртен
Хĕрарăм турăн.

Эп – Тĕнче амăшĕ – Телей,
Эс – Тĕнче ашшĕ, ман Хĕвел.

-4-

Пуррине – кивелсе каясран
Çĕнетсех, çĕнетсех тăмалла,
Юратса пăхмалла.

-5-

Савнине кирлĕ мар туйăма
Кам валли упраса пурăнас?
Ваклаcа вĕтетес те –
Çилпе вĕçтерес-и?

Çав тусан шăрпăкки
Ун куçне тирĕнсе
Чăрмалатăр та...
Çук, тивес мар,
Çулăхма кирлĕ мар.

Савнине кирлĕ мар туйăма
Чул çакса Атăла ывăтас-и?
Вăл шыва кĕнĕ чух
Майĕнчен уртăнма та
Пултарĕ...
Тивес мар,
Çулăхма кирлĕ мар.

Савнине кирлĕ мар туйăма
Тен, вута пăрахса çунтарас,
Пĕçертсе хуратас?
Хăрăм пултăр...

Килсе кайччĕ, савни.
Ни сана, ни мана
Кирлĕ мар туйăма
Сиввĕн вĕр те, сӳнтер.
Пур! – пулни Çук!-кине ĕнентер.

-6-

Чуппа туса пурăнас,
Ача-пăча çуратас,
Ачи-пăчи ӳссе çитсен
Мăнуксемпе савăнас.

Тăванпа тăван пулас,
Пĕрне пĕри пулăшас,

Пĕлĕше те, юлташа та
Кăмăл тума пултарас.

Ĕç çинче – ĕçчен пулас,
Çӳплĕ урайне шăлас,
Хĕн тапăнса кĕрес пулсан
Чăтса тухма чĕм тупас.

Тĕр тĕрленĕн юр юрлас,
Авăн çапнăн таш ташлас,
Çĕнĕ вăйпа реххетленсе
Çĕнĕ кермен савалас.

Çурăм тăрăх – чăш та чăш,
Хырăм тăрăх – кăш та кăш.
Чăваш халăх чун-чĕрийĕ
Кăлтăр-кăлтăр, вăш та вăш.

*02.05.03.*

## ВĔРИ СЫВЛĂШ

-1-

Юрлатăп та юрлатăп,
Ывăнмастăп.
Юрă хывмасăр
Пĕр самант та пурнаймастăп.

Каçкӳлĕм кил, тăван,
Татах та, ӳлĕм.
Яри! çуталĕ саншăн
Çуртăм-килĕм.

Яри! çуталĕ, сассуна илтсе,
Пĕрле юрланине кĕтсе илсе.

-2-

Ывăл-хĕр çурататпăр,
Савăнатпăр, пăхатпăр,
Ӳстерсе çитерсен
Çураçу, туй тăватпăр.
Мăнуксем çуралсан
Хĕпĕртетпĕр, çĕклетпĕр,
Пĕв илсе çитĕнсен
Туйсенче сирпĕнетпĕр.

Мĕн те пур пурлăха
Пайласа уйăратпăр,
Пил парса хăварса
Пурнăçран уйрăлатпăр.

Çакă çеç – чи кĕскен,
Чи ансат каласассăн.
Пĕтĕмпе! – çакă çеç,
Ăрăскалĕ пулсассăн...

Вăрăмрах, тарăнрах,
Тĕпчеме пуçăнсассăн,
Вĕри сывлăш вĕрет
Ăшăмран кассăн-кассăн.

-3-

Савни илет тет савнине,
Саваттăнччĕ, мĕн-ма илмерĕн?
Сана эп ĕмĕр савасса
Шанмарăн пулĕ, ĕненмерĕн.

Кирек хăçан, кирек ăçта та,
Асăм тулли – сăну, сассу.
Ӳт-пĕвĕме кĕрсе вырнаçнă
Манăçайми ачашлăху.

Ĕлĕк санпа тĕл пулнисем –
Асамлă тĕлĕк шайĕнче.
Кĕрен тĕтрелле шуçăмсем –
Кĕрен минтерĕм ăшĕнче.

-4-

Çичĕ ярăм шăрça
Çакса ятăм,
Кăкăр умĕ – тулли.

Çичĕ çаврăм юрра
Шăрантартăм,
Кăмăл-туйăм – тулли.

-5-

Сăнĕ чипер хĕрарăм чунĕ те –
Чипер пулинччĕ.

Çан-çурăмĕ патвар арçын
Ăшчикĕ те – патвар пулинччĕ.

Чиперлĕхпе патварлăх пĕрлешсе,
Пулинччĕех пĕр мăшăр.

Чипер, патвар ăру-тымар ярса
Пурăнаиччĕç кăшăр-кăшăр.

*03.05.03.*

## ЭЙ, ХАЛӐХӐМ

Эй, халӑхӑм, халӑхӑм,
Куҫӑм тулли халӑхӑм,
Чӗрем тулли халӑхӑм.

Эй, халӑхӑм, халӑхӑм,
Ытарайми чипер ҫӗрӗм,
Вӑйпитти тавралӑхӑм –
Ҫӑкасар, юманлӑхӑм.

Эй, халӑхӑм, халӑхӑм –
Чун ӑшши-тасалӑхӑм,
Ырлӑхӑм та сывлӑхӑм,
Савнӑҫӑм та хурлӑхӑм,
Чӑтӑм-йӑтӑм пурнӑҫӑм.

Эй, халӑхӑм, халӑхӑм –
Ачалӑхӑм, яшлӑхӑм,
Ҫӗнтерӳ-хастарлӑхӑм.
Тӑван чӗлхе, тӑван сӑмах –
Мӗн авалтан мул хушакан
Ылтӑн-кӗмӗл пурлӑхӑм.

Эй, халӑхӑм, халӑхӑм,
Чӑваш ятлӑ халӑхӑм –
Улӑп евӗр станлӑхӑм.
Ҫыпӑҫуллӑ ӗҫне-пуҫна
Тӳррӗн йӑтса утатӑн,
Ҫутӑ тӗнче хӳтлӗхӗнче
Ҫутӑ пурнӑҫ тӑватӑн.

Эй, Турӑҫӑм, Турӑҫӑм –
Кӑкӑр тулли сывлӑшӑм.

Тавах, сывă усратăн,
Тимлĕ куçпа упратăн,
Чăваш килне ырă сунса
Ырă ярсах тăратăн.
Этем, Йăва хĕр-ывăльне
Пиллĕн савса пăхатăн.

Эй, халăхăм, халăхăм,
Чăваш ятлă халăхăм –
Вăрлăхăм-пуянлăхăм,
Шанчăкăм, пуласлăхăм.
Чăн-чăн хаклă, чăн-чăн тăван,
Вăйлă, ĕçчен халăхăм,
Чăн-чăн илем, чăн-чăн эреш,
Ĕнчĕ-ахах-мерчен элчи –
Ятлă-сумлă чаплăхăм.

Эй, халăхăм, халăхăм,
Чан сассиллĕ халăхăм,
Сассăр тăрса юлас мар.
Эй, халăхăм, халăхăм,
Илпекленнĕ халăхăм,
Имшерленсе каяс мар.
Эй, халăхăм, халăхăм,
Ăрăскаллă халăхăм,
Ăрăскалсăр юлас мар.
Пурăн, сывла – Шупашкар.

*04.06.03.*

## ЭТЕМ ТЕНИ МĔН КАЙĂК?

Чăтăм ....................6
Епле... ....................11
Шалти вăй ....................12
Ейӳ ....................13
Пĕрлĕх ....................15
Чун ....................16
Пушă ....................17
Кĕлĕ ....................18
Епле-ха?. ....................18
Кĕскен ....................19
Ĕç ....................20
Этем тени мĕн кайăк? ....................21
Итле ....................22
Тапăну ....................23
Хăех... ....................24
Камит ....................25
Кăвайт ....................28
Çĕнĕ çул ....................29
Çапла пултăр ....................30
Чуххăм... ....................31
Миçĕ? ....................32
Этемлĕх ....................33
Халăх пултарулăхĕ ....................34
Выляв ....................36
Кĕскен ....................37
Алшăлли ....................40
Ачашлăх ....................41
Санăн ....................41
Кĕскен ....................42
Мĕншĕн? ....................46
Амăшĕ ....................47
Ăçта каян? ....................48
Сулхăн ....................49
Юмах ....................50
Тур палли ....................51
Кĕскен ....................52
Çын пулма ....................53
Эс иртсе кай... ....................54
Сивĕ ....................55
Йăнăш ....................56
Пурăнасчĕ ....................57
Телейлĕ пулĕ эсĕ ....................58
Çимĕк çитрĕ пулмалла ....................59
Ĕмĕт ....................60
Тав ....................61

Ай, мĕн-ма-ши? ....................63
Пике-тĕтре ....................64
Шырав ....................63
Кăмрăк ....................65
Этемсем ....................66
Хĕвел шевли ....................67
Сăвă-юрă – чун ăшши ....................68
Тараса ....................69
Парне ....................70
Çаврăм ....................71
Саркайăкăм-йăмăкăм ....................73
Тиха ....................76
Тетте ....................79
Куççуль ....................80

*<u>САС КАЯТЬ...</u>*

Никама та каламас ....................82
Ай, улми, сар улми ....................83
Тек юратмастăп ....................84
Ах, сарă роза ....................85
Ĕмĕрлетпĕр ĕмĕре ....................87
Ан юрла-ха, ан юрла ....................88
Ăçта эс? ....................89
Каçар мана ....................90
Сас каять ....................91
Вĕçен кайăк пулнă пулсан ....................93
Чăн сăмахăн суйи çук ....................94
Иртсе кайĕç ĕмĕрсем ....................95
Эс çуралнă кун паян ....................96
Ан кулянсам, тăванăм ....................97
Кĕр те иртрĕ пулмалла ....................99
Пурăнмалла ....................101
Хура вăрман кашлатать ....................102
Эсĕ питĕ инçетре ....................103
Мана курас килсе кайсан ....................104
Хăть те кама ăшăт ....................105
Кĕрес марччĕ çылăха ....................106
Хĕр куртăм ....................107
Çĕмĕрт йывăç сĕре хитре ....................108
Пирĕн хушăра ....................109
Тек ним те мар ....................110
Çухатмастăп терĕн-им? ....................111
Калама хăймастăн пуль ....................112
Кĕмĕл кĕпер урлă ....................113
Мана качча тух ....................114
Ай, курăксем, чечексем ....................115
Çĕнĕ çул юрри ....................116

Шăнкăравла ....117
Шăнкăр та шăнкăр ....118
Манса каяймастăп ....119
Атăл тăрăх ....120
Сансăр ....121
Ай-хай, тăван ....122
Аххаяс та маххаяс ....123
Ай, шухăшсем-ĕмĕтсем ....124
Йĕле-йелю кусçулĕм ....125
Пурăн ĕмĕре ....126
Уява уяв пек тăвар-и? ....127
Мăкăнь чечек çуралчĕ ....128
Савнă Шупашкар ....129

## *ТĔРЛЕНЧĔКСЕМ*

Кантăк витĕр пăхса... ....134
Хăравçă ....148
Раштав сăввисем ....151
Тĕкĕр ....157
Чуна уçса... ....160
Чун апачĕ ....167
Çунма – ансат, сӳнме – асап ....169
Турă пилĕ ....176
Саккун ....181
Вĕри сывлăш ....185
Эй, халăхăм ....186

Кӗнекене кӑларма пулӑшнӑшӑн
чӗререн тав сире,
хаклӑ ентешӗмсем, Канашсем.

Канаш районӗн администрацийӗ
Пуҫлӑхӗ С.В. Антонов

Патшалӑх унитарлӑ предприятийӗ «Жилтехстрой»
Тӗп директорӗ Г.К. Константинов

Шӑхасанти «Сельхозтехника» пӗрлешӗвӗ
Директорӗ М.Ф. Игошин

«Канаш» ялхуҫалӑх предприятийӗ
Пуҫлӑхӗ В.В. Долгов

Канашри чӑх-чӗп предприятийӗ
Директорӗ И.К. Суранов

Киров ячӗллӗ ялхуҫалӑх предприятийӗ
Пуҫлӑхӗ Н.С. Андреев

Канашри райпо
Пуҫлӑхӗ В.А. Павлов

Светлана Васильевна Азамат

ЧĂТĂМ

Выносливость

Дизайн и верстка А.В. Сорокина

Рисунок «Ступени жизни» С.В. Азамат

Подписано в печать 08.08.2003 г. Формат 60/90 1/32.

Бумага офсетная. Печать офсетная.

Гарнитура Arial Cyr Chuv. Усл. печ. 10,53.

Тираж 300 экз. Заказ № 1.

Отпечатано ЧП Сорокиным А.В.

428015, г. Чебоксары, ул. Университетская, 48.

50:00


Чăтăм –
Турă панă Йăтăм.
С. Асамат